Библиотека им. М. Горького

ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул
Январь
14
ШĂМАТКУН
№ 10 (9689)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

К. Е. Ворошилов, Н. С. Хрущев тата В. М. Молотов Иран парламенчĕн делегацийĕн членĕсене ăшшăнни (1 стр.).

Н. С. Хрущев юлташ Гарольд Вильсона ăшшăнни (1 стр.).

А. И. Микоян Гарольд Вильсона ăшшăнни (1 стр.).

В. М. Молотов Иран парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхне Мохаммед Саед господина ăшшăнни (1 стр.).

Обласçи парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ. (1—2—3 стр).

Республикăри хуласемпе ялсене (4 стр.).

Индонезипе СССР хушшинчи туслăх обществи (4 стр.).

Китайпа Итали хушшинчи калаçусем (4 стр.).

Тито президент Белграда пырса ситнĕ (4 стр.).

Польшăра асăл шкулсем пуманланса пыраççĕ (4 стр.).

Китайра марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене пуман пичетлесе кăлараççĕ (4 стр.).

Даллес «Лайф» журнал корреспонденчĕне калаçни (4 стр.).

Парти массисен активлăхĕ ӳсет

Çĕрпӳ Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съезчĕ ячĕпе пуçланă хатĕрленет. Коммунизм тăвас çул çинчи историпе палăк вăхăт пуласа тăракан çак событи пахăпе сывхарăçемĕн. Хăйсен асăлă партине чунтан юратакан совет сыннисен чĕрисем хавасланăпах тапаççĕ, вĕсем куллен-ĕçре кăтартакан пăтăрăшăх татах та уçăмлăраххăн палăрать. Партин съездне производствăри çинçĕуçемпе кĕтсе илесси—халĕ пĕтĕм ĕçсăмпасем чи хĕрӳ те чи паха пухăнăм-ĕмĕчĕ.

Коммунистсен партийĕ çĕрпӳпе умне промышленноçа малалла аталантарас, техникăлла прогресс тăвас тата производствăна организацилесспне лайăхлатас, яхăçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене хăвăрт аталантарас тĕллĕпне калама çук пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Çак задачăсене пурнăçа кĕртесси пĕтĕм совет халăхĕн сывăхран та сывăх ĕçĕ пулса тăчĕ.

КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе пыракан пĕтĕм халăхăн социализма ăмăртăнĕпе тăнă чанăл çитĕнӳсем çинчен кални кунăх çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем килеççĕ. Кирек ăçта пăхсан та, пур çĕрте те—Мускаври Владимир Ильич ячĕпе тăракан заводăн цехĕсенче, Атăл çинчи Куйбышевпа Сталинград гидроэлектростанцийĕсен тата Ангара çинчи Братски гидроэлектростанцийĕн строительство площадкисенче, Украинăпа Белоруси колхозĕнче, çерем уçăлă çĕрти çĕнĕ совхозсенче—пĕтĕм çĕршывра Таван çĕршыв чăнĕпех, унăн вăй-хăвачĕн малаллаах аталанăвĕпех хĕрӳ ĕç вĕренине куратăр.

Заводсенчи, фабрикăсенчи, шахтăсенчи тата стройăкăсенчи, колхозсенчи, МТС-сенчи тата совхозсенчи производство коллективĕсен пуçĕсенче парти организацийĕсем, коммунистсем пысраççĕ. Хăйсен çирĕп йĕркелĕхĕне, ĕçе ăнăнуллă туса пынине, ĕçре лайăх тĕслĕх кăтартакине коммунистсем ĕçсăмпи массисене хавалатаççĕ, партин лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçама сăнисене кĕрешĕне сĕкленеçĕ.

Районсеме хулисенче пулса иртнĕ партконференцисем, халĕ иртекен областсенчи партконференцисем парти массисен активлăхăн пуçтарулăхăнпе пĕрмаях ӳсен пынине кăтартса паççĕ. Коммунистсен промышленность тата яхăçлăхăн ыйтăвĕсем тăрăх парти ăшшăнни решенисене хăвăртрах пурнăçлассишĕн хытă тăрăшни вĕсем çак конференцисене ĕçри сăтменлĕхсене сивĕчĕн критикленине, паха сĕнӳсем паниче палăраççĕ.

Парткомференцисем çав вăхăтрах çакна та кăтартса паççĕ: чылай парти комитечĕсем пуçламăш парторганизацисен пултарулăхне, коммунистсен анлă массисен активлăхне тăтăпах ӳстерес пыма тивĕçлĕ мерăсем ăшшăмсçĕ. Нумай парти комитечĕсем хуçалăхпа культура строительствин задачисене çак ĕçе пур пуçламăш парторганизацисене, мĕнпур коммунистсене активлăн хутшăнасăн тин ăнăçла татса, пама пултарнипе хăшпĕр чухне манса кайçĕ.

Пуçламăш парторганизацисен ĕçпе лăпкластас, парти массисен активлăхĕпе пултарулăхне аталантарас тĕлĕнпе малалле те сăпа тăрса, пĕтĕм ăсталăхпа тăрăшмалла. Сăмах çинчен пырать: пуçламăш парторганизацисен вăйне, коммунистсен активлăхне конкретлă ĕçе, практикăлла вăйăçсене тата парас ĕçе мобилизацилемелле. Промышленноçпе çавăн пек конкретлă ĕç государствпе планĕсене тутăрассишĕн тата йыттисе тутăрассишĕн, производствăн техникине технологине лайăхлатассишĕн кĕрешесси пулать. Яхăçлăхăнчи вăл — сураконе лайăх хăтĕрленесси, вылăх-чĕрлĕхсе ăнăçлă хĕл кăçарасси. Çакăнта ĕнтĕ халĕ тĕп задачăсем, çав задачăсене тата парассишĕн коммунистсен ĕçлемелле те ĕнтĕ.

Пуçламăш парторганизацисен ĕçĕ партин лартнă задачăсене практикăра пурнăçлассине тачăлăрах сыхăнса пынăçемĕн, коммунистсен активлăхĕ ӳссе пырать. Пуçламăш парторганизацисен ĕçĕ производствăна сыхăнманни, конкретлă пулманни çинчен калакан фактсем те тĕл пулаçĕ-ха. Чылай чухне парторганизацисем предприяти, колхоз, МТС, учреждени пурнăçĕнчи чи кирлĕ ыйтусенчен пăрăнса иртсе каяççĕ. Çакăнпăн парти комитечĕсем те нумай енчен айăпăл, мĕншĕн тесен вĕсем пуçламăш организацисене халĕ те конкретлă тата вĕсен условийĕсене кура ертсе пымаççĕ.

Саранск хулинчи партконференцин делегачĕсем уйрăм руководительсен ячĕпе вĕсем пуçламăш парторганизацисене наçар пуçăнусем пынăнăн нумай критикаланă. Сăмахран, хула комитечĕн секретарĕ Черенков юлташ парторганизацисене сайра хутра кăна пулнине, вĕсен пурнăçĕпе интересленменине кăтартса панă. Çавăн пек тĕслĕхсем Рязань хулинчи партконференцине те илсе кăтартă. Пуçламăш организацисене хут çинче сырнă дирокративăсем мар, ĕçлĕ пулăшу, ĕçе мĕнле пĕрмаях келемелине вĕрентни кирлĕ.

Тепĕр чухне тата урăхла фактсем те тĕл пулаçĕ: пуçламăш организацисене ĕçлĕ ертсе пыраке выраине вĕсен мĕнпур вак-тĕлĕк ĕçĕсем пирки асăрхатмасть тата-рассĕ, вĕсем кашни утăмне кăтартса параççĕ. Магнитогорск хулинчи партконференцине хула комитечĕн секретарĕ Щербаков юлташ хăшпĕр пуçламăш парторганизацисене вĕсем сутте тăракан парторганизацисем сĕннĕ кун йĕркисем тăрăх кăна парти пухăвĕсене ирттернĕшĕн ӳпкелешнĕ. Хула комитечĕн секретарĕн кунта ячĕпе комитечĕн хăйĕн ĕçĕ пирки критикăлăрах пуçмалла пулнă: Магнитогорскра хула комитечĕ хăй сутте тăракан партиорган пулса тăрать вĕт-ха.

Парти массисен пысăк активлăхĕ тӳрремĕнех партин ялти ĕçне лайăх йĕркеленичен килет. Парторганизацисен ĕçĕ хăйĕн идейăлла содержанийĕпе пуян пулсан, вăл пурнăçа тачă сыхăнса тăрать пулсан, коммунистсен активлăхне аталантармалли майсем те пысăк пулаççĕ. Кунта çакна туни кирлĕ: коммунистсен камăн ĕçĕ сĕнĕвне пуçта илмелле тата пурнăçламалла, критикăлла канăм асăрхатару тăрăх мерăсем ăшшăмалла.

Çакăн пек те пулать (ун çинчен нумай отчетна суйлан пухăнăссинчо тата конференцинчо те калаçă): хăшпĕр руководительсем, критикăна итлесе, унпа килĕшессĕ, çитменлĕхсене пĕтĕрме çăмах памаççĕ, анчах часах хăйсен сăмахăсем çинчен манаççĕ. Кайран, пĕр-икĕ çулталăкран, теприн конференцине калаçăн пек ситуациллĕхсем пулни кăна çитмеллĕхсем çинчен калаçаççĕ, ĕçĕ вара вылăнтан тапранаманна пĕрох. «Çултан çулах,—теннĕ Астрахань областĕнчи Кирпичники районти парткомференцин делегачĕ Новикский юлташ,—парткомференцине нĕр çитменлĕхсенех асăнатăр. Анчах вĕсене мĕнле пĕтерни отчетпа докладра палламăр...»

Çакăн пек йĕрке пачах пулмалла мар. Парти комитечĕсен коммунистсем панă мĕнпур хакла сĕнӳсеме пăхăнса асăрхаттарусене шута илсе пĕтĕртермелле, отчетпа суйлан пухăвĕсен тата парткомференцисен решенийĕсене пурнăçланине тăшăах тĕрĕслемелле, çав сĕнӳсене пурнăçлани çинчен коммунистсене яланах пĕлтерсе тăмалла.

Пирĕн парти пултарулă, активлă ĕçлекен чăрăш организм пулса тăрать. Вăл хăйĕн членĕсем ăнланулăх тата активлă пулнине вăйлă. Совет çынннисем коммунистсем пирĕн обществăн малта пыракан çынннисем пулнине курассĕ. Вĕсен ананăçлă ĕçĕ ăна пулнине, вĕсен пурнăçĕпе интересленменине кăтартса панă. Çавăн пек тĕслĕхсем Рязань хулинчи парткомференцине те илсе кăтартă. Пуçламăш организацисене хут çинче сырнă дирокративăсем мар, ĕçлĕ пулăшу, ĕçе мĕнле пĕрмаях келемелине вĕрентни кирлĕ.

Тепĕр чухне тата урăхла фактсем те тĕл пулаçĕ: пуçламăш организацисене ĕçлĕ ертсе пыраке выраине вĕсен мĕнпур вак-тĕлĕк ĕçĕсем пирки асăрхатмасть тата-рассĕ, вĕсем кашни утăмне кăтартса параççĕ. Магнитогорск хулинчи парткомференцине хула комитечĕн секретарĕ Щербаков юлташ хăшпĕр пуçламăш парторганизацисене вĕсем сутте тăракан парторганизацисем сĕннĕ кун йĕркисем тăрăх кăна парти пухăвĕсене ирттернĕшĕн ӳпкелешнĕ. Хула комитечĕн секретарĕн кунта ячĕпе комитечĕн хăйĕн ĕçĕ пирки критикăлăрах пуçмалла пулнă: Магнитогорскра хула комитечĕ хăй сутте тăракан партиорган пулса тăрать вĕт-ха.

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 13-мĕшĕнчи умотаăлă).

КПСС XX-мĕш СЪЕЗЧĔ ЯЧĔПЕ

Икĕ уйăхри плана—съезд уçăлнă тĕле

КАНАШ. (Хăмăр корр.). Çĕвĕ çĕлекен фабрика коллективĕ 1955 çулта ăнăçлă ĕçлерĕ. Суталăкри производство планне вăл пур ассортиментсем енĕпе те иртертеле тутăрчĕ тата планран иртнерсе 300 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ.

Фабрика коллективĕ ĕç тухăçăпăке ӳстерес, продукцин хăйне пăраканă хакне чакарас енĕпе те плана иртнерсе тултарчĕ, çавна май чылай тупăн ячĕ. Çакă вăл çĕвĕ çĕлессине потăк меслечĕпе организацилеперсен чылай кичĕ.

Фабрика коллективĕ çĕнĕ çулта çĕнĕ ĕçемсем тăвассишĕн кĕрешеç. Кăçал уйăн 1955 çулхинчен икĕ хут ытларах продукци туса кăларамалла. Коллектив кăçалхи икĕ уйăхри плана планран иртнерсе 300 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларчĕ. Чылай цехсемпе сменăсем çĕнĕ çулăн малтанхи куйĕсенчен пуçласах задание иртнерсе тултарассĕ. М. Корчагина мастер ертсе пыракан смена вăтăрăн плана 125 процента çити, И. Устюгова юлташ ертсе пыракан цех 110 процент тултарассĕ.

Ăмăртура мала тухнă

КРАСНОАРМЕЙСКИ. (Хăмăр корр). «Путь Ленина» колхозри дояркăсем КПСС XX-мĕш съезчĕ умĕнчи социализма ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартарçĕ, ĕнесенчен сĕт суса илессине ӳстерес пырассĕ. М. Владимирова доярка çĕнĕ хуçалăх сулĕн виçĕ уйăхĕ хушшинче кашни ĕнерен вăтăм шутпа 300 килограмм е иртнĕ çулти çак вăхăтринчен икĕ хут нумайрах сĕт суса илнĕ. Вăл колхозри тата çавăн пекех районти дояркăсем хушшинчи ăмăртура пĕрремĕн вырăн ыйăнать. Хастарлă доярка съезд уçăлнă кун тĕлне кашни ĕнерен 500 килограмран кая мар, çулталăк хушшинче пурĕ 1.900-шер килограмм сĕт суса илме обязательство илнĕ.

Артель правленийĕ доярккăсен социализма ăмăртăвне лайăх организацилеме тăрăшать. Ăмăрту итогĕсене кашни пилĕк кунтах тĕрĕслесе тăраççĕ.

Кукуруза пысăк усă пачĕ

ЕЛЧĔК. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем КПСС XX-мĕш съезчĕ умĕнчи кунсеннне ниçханнинчен пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Колхозниксем ĕçре пухăнăмăпа—артель хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпĕн çĕнĕ ситнĕсем тăвасси.

Колхозра ӳрăмах вылăх-чĕрлĕх ĕрчетесе ĕçе вăйлатмалла. Ку тĕлĕпе иртнĕ суранеçне хăшпĕр ĕçсем турăмăр. 300 пус нарăмăсăлăхăн çĕнĕ сысна вити тунă. Кĕркунне 80 пус сысна самăртрăмăр, кашнин чĕрĕ виçине 90-шар килограмм ситертĕмĕр. Кукуруза акса туни вылăх-чĕрлĕх валли сителлĕ сĕтекелĕ апатсем хатĕрлене май пачĕ. Кăçал кашни сăваках ĕне пусне 30 пăт тăрăх, 5 тонна кукуруза силосĕ уйăрнă, çавăн пекех çĕрулмине кăмпан та сителлĕкĕ. Фермăсенчи йывăр ĕçсене механизацинленĕ.

Фермăра ĕçлекенсем хушшинче социализма ăмăрту вăйланасах пырать. Доярккăсем съезд уçăлнă тĕле сĕт ытларах суса илме обязательство илчĕç. 30 сысна самăртна уйăрнă.

Е. ТРОФИМОВ.
Колхоз председателĕ.

Аванс шучĕпе тулеççĕ

ЭЛЕК. «Правда» яхăçсăлăх артелĕн членĕсем 1956 çулхи яхăçсăлăх налогĕн уйăсине аванс шучĕпе тулеççĕ. М. Кузьмина, Е. Аверкиева, О. Степанова, Ф. Уткин, А. Ильин, Н. Капитонов юлташсем пĕтĕмпех тулеспе татрĕç.

Колхозниксем кĕске вăхăт хушшинчех 9 пин тенкĕ ытла аванс шучĕпе налог уйăсии пухса пачĕç.

А. ОРЛОВ.

Степанов каменщикĕн

Каменщиксен бригадин бригадирĕ Степанов, чĕлĕм туртса тăнă май, юнашар ĕçлекен юлташĕсем сине пăхса ларать. Вĕсен ĕçĕ ытлах ăнманнине асăрхаса пулас, алăпне мастерка тытса юлташсем патне пычĕ. Раствора питĕ хăвăрт тикĕслерĕ те кирпĕч сине кирпĕч хурса пыма тытăнчĕ.

— Хĕлле раствора сулланăшпа сăхĕрах сармалла,— терĕ бригадир. Пир-авăр комбинатне тунă çĕрте ĕçлекен каменщиксен бригадин бригадирне Михаил Степанова лайăх пĕлеççĕ. Çак строительство трестĕнче уятă çул ĕçлесе, вăл Шупашкартри пир-авăр комбинатĕнче малтанхи фабрикисене тунă çĕрте пайтах кирпĕч куналанă. Мухтавăша тивĕçлĕ строитель халĕ фабрика корпусне тунă çĕрте ĕçлет. Хăйĕн нормине ыланах ирттерсе тултарнине пĕрлех вăл самăркене ăста каменщиксем нулма вĕрентет. Вăл пулăшнине вĕренекенсем халĕ тĕрлĕ стройăкăсенче 100 сын ытла ĕçлеççĕ.

Январь уйăхĕнче Степанов бригади комплексла поток меслечĕпе ĕçлеме тытăнчĕ, паха пуçару турĕ. Ăна кура ытти бригадăсем те çĕнĕ меслетпе ĕçлеме тытăнчĕç. Бригадăсем КПСС XX-мĕш съездне тивĕçлине кĕтсе илесситĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем çăкĕн обязательстăсене пурнăçлассишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ.

В. НИКИТИН.

МАЛТА ПЫРАКАН ФЕРМĂСЕНЕ — КУÇСА СУРЕКЕН ВЫМПЕЛСЕМ

КАЛИНИНО. Районти вылăх-чĕрлĕх пăхакансем хушшинче КПСС XX-мĕш съезчĕпе пысăк ситнĕсеме кĕтсе илесссишĕн социализма ăмăрту вăйланасах пырать. «Трактор» колхозри доярка, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ Е. Соколова юлташ çĕнĕ хуçалăх сулĕн малтанхи виçĕ уйăхĕнче кашни ĕнерен 500-шер литр сĕт суса илесе, ăмăртура пĕрремĕн вырăн ыйăнать. Соколова юлташ съезд уçăлнă тĕле кашни ĕнерен 750-шар литрлăн ытлах сĕт суса илме сăмах панă. Районти доярккăсен хушшинчи ăмăртура Платонова юлташ иккĕмĕш вырăна тухнă.

Соколовăпа Платонова доярккăсене КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн куçса сӳрекен вымпелĕсене панă.

В. ВИКТОРОВ.

Обласçи парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ

Енер, январĕн 13-мĕшĕнче Чăваш государствло академи театрĕнче обласçи парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ уçăлнă.

Конференцие парти обкомĕн пĕрремĕн секретарĕ **С. М. Исполнов** юлташ ӳсрĕ.

Конференци президиумне пурте пĕр сасăлă пулса çак юлташсене суйланă: Г. А. Алексеев, И. Н. Богатырева, М. Н. Ардамацкий, П. В. Васильев, А. А. Григорьев, К. Е. Ефимьлев, Н. Е. Егоров, А. С. Ерлаков, В. В. Зайцев, И. А. Захарцев, А. И. Иванова, К. И. Игнатьева, С. М. Исляков, А. И. Киреев, Д. П. Кирничев, В. И. Кочанова, Г. П. Ковалев, М. Д. Корабельников, С. К. Коротков, В. М. Ялин, А. Н. Лычагина, К. В. Маркова, Д. Я. Митьков, Е. И. Молтачков, М. В. Морозов, Н. Н. Никитин, И. В. Новиков, М. М. Романова, О. Н. Русдна, М. С. Степанов, П. Т. Тимофеев, П. А. Чичкин, Ф. П. Юхтанов, В. Я. Яковлев, Л. И. Яшмолкина юлташсене.

Хисеплĕ президиума Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Президиумне суйласси сăнчен пана сĕнĕве конференци пысăк хавхаланупа йышăнчĕ.

Секретариата çак юлташсене суйланă: Д. И. Абашев, А. Ф. Башкиров, А. Ф. Воронов, В. Д. Дмитриев, А. И. Иванов, А. А. Сысин, М. И. Якимов. Мандат комиссине çак юлташсене суйланă: И. Д. Албутов, В. А. Алексеев, И. И. Иванов, М. А. Кузьмин, Л. Х. Михайлов, А. Е. Мустакова, П. Н. Николаев, И. П. Петров, Г. Т. Трофимов.

Конференци çирĕплетнĕ кун йĕрки:

1. КПСС Чăваш обкомĕн ĕçĕсем çинчен туна отчет.
2. Ревизи комисси отчечĕ.
3. Парти обкомне суйласси.
4. Ревизи комисси суйласси.
5. КПСС XX-мĕш съездне кайма делегатсем суйласси.

КПСС обкомĕн ĕçĕсем çинчен парти обкомĕн секретарĕ **С. Исполнов** юлташ отчетлă докладпа тусе пачĕ.

Унтан конференци ревизи комисси отчетне итлерĕ. Ку мĕнпуçа комисси председателĕ **Митьков** юлташ доклад туса пачĕ.

Пренире çак юлташсем тухса каларĕç: Чичкинии—КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ, **Коротков.**—Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, **Егоров.**—ВЛКСМ Чăваш обкомĕн секретарĕ, **Кузьмин.**—КПСС Сĕнĕрле райкомĕн секретарĕ, **Кириличев.**—КПСС Сĕрпӳ райкомĕн секретарĕ, Енчиков—Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕ, **Фомин.**—Улатăр хулинчи строительство управленийĕн слесарĕ, **Яковлев.**—КПСС обкомĕн секретарĕ, Пятухов—трактор пăйĕсем тăвакан завод директорĕ, Хирпушии — Сĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕн директорĕ, Башкиров—Чăваш государственнăй университечĕн ректорĕ, Ругиш—Чăваш АССР Министрĕсен Советĕ сумĕнчи шессе сулĕсемпе автотранспорт управленийĕн начальникĕ, **Иванов**—КПСС Шăмăрпа райкомĕн секретарĕ.

Малалла конференцин мандат комисси председателĕ Михайлов юлташ тунă доклада итлесе сирпĕлетрĕç.

Обласçи партконференци пани малалла ĕçлет.

ОБЛАСÇИ ПАРТОРГАНИЗАЦИН XXVI-мĕш КОНФЕРЕНЦИЙĔН ДЕЛЕГАЧĔСЕМ (сулăхăйран сыпăмалла): Н. Г. Печкин—Канаш депо машинисчĕ, Р. С. Апполонов — Куславкка районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, А. А. Михайлов — Чкаловски МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ, Н. П. Сасакин—Сĕмĕрле обкомĕпе пăхăнакан заводри слесарь, П. Н. Кистанов—Сĕмĕрле районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕ тата Л. Т. Пушков—Куславкка МТС-ĕнчи трактор бригадин бригадирĕ.

Г. Зяльков фотоочерки.

Государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕнче

Январĕн 12-мĕшĕнче Мускавра государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзне финансина банк работникĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕсен пĕрлешӳллĕ пленумĕ пулса иртнĕ.

Пленум çак икĕ профсоюза государство учрежденийĕсенчи работниксен пĕр профсоюзне пĕрлештерме йышăннă. Профсоюз Центральнăй Комитечĕн председателĕ пулма Г. П. Петелин юлтăпа, секретарь пулма А. А. Лосева юлтăпа суйланă.

Профессиллĕ союзăн съездне кăçалхи апрель уйăхĕнче Мускавра пухма йышăннă. (ТАСС).

ÇĔР АЙĔНЧИ ТИНЕС

Гидрогеологсем иртнĕ пилĕкçулăх вăхăтĕнче Караганда областĕнчи промышленноçăн тĕп районĕнче çĕр айĕнче 1.200 тăваткал километр лаптăкăн тинĕс пуррине тĕпчеçĕ-мĕнĕ. Ăна «Караганда тинĕсĕ» тесе ят панă. Çак тинĕс миллионшар çул ĕлĕкрех пулса тăнă. Ун чухне Караганда бассейнĕнче çав трри пысăк путăк вырăн пулнă. Çанталăк ăшă тăнă тата нӳрĕ климат пулнă пирки айăлма çумăр шывĕ тулнă.

Унтă халĕ ĕнтĕ шыв танса тăракан 10 пăтăк пăраласа тунă. Вĕсенчен каннинех секундăн 20 литр таран шыв парса тăрать.

Çĕнĕ пилĕкçулăхра «Караганда тинĕсĕ» çĕр кăмăрăк бассейнĕнче промышленноçра усă курма тата унта пурăнакансене ĕçме кирлĕ чухлĕ шыв пама пуçлать. (ТАСС).

Т. С. МАЛЬЦЕВАН ÇĔНЕ КĔНЕКИ

«Красный Курган» хаçат издательстви колхозри ученăй Т. С. Мальцев сăрнă «Опыт урăх—наукăна» ятлă кĕнекене пичетлесе кăларнă. Кĕнекере автор хăй колхоз уйăсенче нумай çул хушши туса пынă наукăлăна тĕпчев ĕçĕсем çинчен сăрнă. Ку вăл—ученăй-мичуринецăн пилĕкмĕш кĕнеки.

Курган областĕнчи ялхуçалăхне вăйлатас тĕллĕпне Т. С. Мальцев тунă тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсене Курган областĕнчи партконференцини коммунистсем пысăка хурса хаклаç, ăна КПСС XX-мĕш съездне кайма делегата суйланă. (ТАСС).

Облаҫри парторганизацин XXVI-мӗш конференцийӗ

КПСС Чӑваш обкомӗн ӗҫӗсем ҫинчен

КПСС обкомӗн секретарӗ С. М. Ислюков юлташ тунӑ докладран

Юлташсем! Облаҫри парторганизацин XXVI-мӗш конференцийӗ историлле цаллӑ событи—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XX-мӗш съезчӗ умӗн, ҫӗнӗ пилӗкҫуллӑх пуҫланнӑ тапхӑрта пулса иртет.

Иртнӗ пилӗкҫуллӑхра пирӗн ҫӗршыв коммунизм тумалли ҫулпа пырса пысӑк утӑм турӗ. Пилӗкҫуллӑх заданийӗсене промышленность енӗпе срокчен пурнӑҫланӑ. 1955 ҫулта промышленность производствин шайӗ, вӑрҫӑччен 1940 ҫулхипе танлаштарсан, виҫӗ хут ытла ӳснӗ.

Совет ҫыннисем Совет государствин хӑватне тӗреклетмелли тата халӑх массисен пурнӑҫне пӗрмай лайӑхлатса пымалли никӗс—социализмла индустри тунӑ чаплӑ ҫитӗнӳсемпе тивӗҫлипе мухтанаҫҫӗ. КПСС Центральнӑй Комитечӗн иртнӗ ҫулти июльте пулса иртнӗ Пленумӗ наукӑпа техника ҫитӗнӗвӗсене, малта пыракан опыта производствӑна кӗртнипе промышленноҫа хӑватлӑн аталантармалли ҫул-йӗре палӑртрӗ. Коммунистсен партийӗ йывӑр промышленноҫа ытларах аталантарма кирли ҫинчен вӗрентекен ленинла ҫул-йӗре ҫирӗп тытса пырать, ӑна ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртет.

Партипе правительство юлашки икӗ ҫул хушшинче социализмла ялхуҫалӑхне вӑйлӑн ҫӗклемелли историлле решенисем йышӑнчӗҫ, халӗ вӗсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Чылай районсенче ҫанталӑк начар тӑнӑ пулин те ҫӗршывра 1955 ҫулта тырӑ, сахӑр кӑшманӗ, пахча ҫимӗҫ, аш-какай, сӗт, ҫӑм тата ытти продуктсем 1954 ҫулхинчен чылай ытларах туса илнӗ тата хатӗрленӗ.

Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви халӑх пурнӑҫне лайӑхлатас, ӗҫ ҫыннисен культурипе ӑнланулӑхне ӳстерес тесе мӗн кирлине пурне те тӑваҫҫӗ.

Совет государстви тулашри политика енӗпе туса ирттернӗ ӗҫсем тӗнчери йывӑрлӑхсене пӑртак ҫӑмӑллатма, тӗнчери мире ҫирӗплетме пулӑшрӗҫ. Н. А. Булганин тата Н. С. Хрущев юлташсем Индире, Бирмӑра, Афганистанра пулни мире ҫирӗплетес енӗпе пысӑк ӗҫ туни пулать. Унта кайса килни СССР, Инди, Бирма тата Афганистан халӑхӗсене пӗр-пӗринпе ҫывӑхрах пулма кӑна мар, тӗнчери мире юратакан вӑйсен позицийӗсене ҫирӗплетме те пулӑшрӗ, халӑхсем хушшинчи пӗртанлӑх тата туслӑх идейисем, государствӑсем, вӗсен тӗрлӗ обществӑлла системӑсем пулсан та, пӗр-пӗринпе мирлӗ пурӑнма пултарни ҫинчен калакан идейӑсем ҫӗнтерӳ туни пулчӗ.

Тулашри тата шалти политика енӗпе ҫитӗнӳсем туни советлӑ социализмла государствӑна татах та ҫирӗплетсе тӗреклетрӗ, унӑн тӗнчери авторитетне вӗҫӗмсӗр ҫӗклерӗ. Ҫав ҫитӗнӳсен никӗсӗ ҫинче совет обществин моралле-политикӑлла пӗрлӗхӗ, халӑхсем хушшинчи туслӑх, чӗрӗ вӑй парса тӑракан совет патриотизмӗ малалла аталанчӗҫ.

Совет Союзӗнчи халӑхсен тӑванла ҫемйинче отчетлӑ тапхӑрта Чӑваш АССР-ӗнчи ӗҫҫыннисем те паллӑ ҫитӗнӳсем турӗҫ.

Облаҫри партконференци ҫав ҫитӗнӳсене тивӗҫлӗ хак парса, обком ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсемпе йӑнӑшсене палӑртассине, республикӑри халӑх хуҫалӑхне малалла аталантарас тӗлӗшпе пуян резервсемпе усӑ курмалли майсене палӑртассине тӗп вырӑна хурӗ.

I. Промышленноҫа, строительствӑна, транспорта, ҫыхӑну ӗҫне ертсе пыни

Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра, вӑл шутра отчетлӑ тапхӑрта та, Чӑваш республики промышленноҫа аталантарас енӗпе малалла ҫӗнӗ утӑм турӗ. Шупашкарти пир-авӑр комбиначӗн пӗрремӗш черетне тата ытти чылай предприятисене ӗҫе янӑ, производство лаптӑкӗсем ӳснӗ, трактор деталӗсем тӑвакан завод строительстви анлӑн сарӑлнӑ. Пилӗкҫуллӑхра промышленноҫӑн тӗп фончӗсем 74 процент, вӑл шутра юлашки икӗ ҫул хушшинче—34 процент ӳснӗ.

1955 ҫулта республикӑри промышленность туса кӑларакан валовой продукцин калӑпӑшӗ, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 94 процент, 1953 ҫулхипе танлаштарсан,—36 процент ӳснӗ.

Чӑваш АССР-ӗнчи промышленность пилӗкҫуллӑхра продукци туса кӑлармалли задание тӑватӑ ҫул та виҫӗ уйӑх ҫурӑ хушшинче пурнӑҫланӑ. 1954 ҫулхи государство планне 106 процент, 1955 ҫулхи плана, малтан шутласа пӑхнӑ тӑрӑх, 103 процент тултарнӑ.

Промышленноҫра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 59 процент ӳснӗ. Юлашки икӗ ҫул хушшинче кӑна продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетнипе планран ирттерсе 12,6 миллион тенкӗ укҫа перекетлесе хӑварнӑ.

Валовой продукци туса кӑларасси ӳснин пӗтӗм хисепӗнчен 75 процентне ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстернипе тунӑ. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Шупашкарти электроаппаратура завочӗ лайӑх тӗслӗх кӑтартнӑ. Кунта пилӗк ҫул хушшинче производство лаптӑкӗсем 30 процент чухлӗ кӑна пысӑкланнӑ, ҫав вӑхӑтрах продукци туса кӑларасси 3 хут ытла ӳснӗ. Заводра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ 2,6 хут ӳснӗ. Заводри ертсе пыракан работниксем, инженерсемпе техниксем тата парторганизаци производство технологине, ӗҫе организацилессине лайӑхлатма, кадрсен квалификацине ӳстерме, рабочисем хушшинче социализмла ӑмӑртӑва анлӑрах организацилеме тӑрӑшаҫҫӗ. Заводра производствӑра малта пыракансем, новаторсем ӳссе ҫитӗннӗ, вӗсен шутӗнче Мищенко, Королев, Монахова, Кузнецов коммунистсем т. ыт. те.

Анчах ҫакӑ вӑл электроаппаратура заводӗнче ҫитменлӗхсем тата усӑ курман резервсем ҫуккине пачах пӗлтермест. Кунта та ҫитменлӗхсем пур.

Шупашкарти лента тӗртекен, Ҫӗмӗрлери йывӑҫ япаласем тӑвакан, Шупашкарти торф предприятийӗ тата ытти хӑшпӗр предприятисем те ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗ.

Промышленность работникӗсем КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ «Промышленноҫа малалла аталантарас, техникӑлла прогресс тӑвас тата производствӑна организацилессине лайӑхлатас задачӑсем ҫинчен» йышӑннӑ постановленине тулли кӑмӑлпа ырласа йышӑнчӗҫ. Предприятисемпе министерствӑсенче ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерес, продукцин хӑйне ларакан хакне йӳнетес, промышленность продукцийӗ туса кӑларассине ӳстерес тата унӑн пахалӑхне лайӑхлатас шутпа ҫӗнӗ техникӑпа малта пыракан технологие производствӑна кӗртме тивӗҫлӗ ӗҫсем туса ирттерме палӑртнӑ. Чылай предприятисенче ҫав ӗҫсене пурнӑҫласа хӑшпӗр утӑмсем тунӑ ӗнтӗ. Нумай предприятисенчи парторганизацисем техникӑлла прогресшӑн пыракан кӗрешӗве тивӗҫлипе ертсе пыраҫҫӗ. КПСС Шупашкар хула комитечӗ ку ӗҫе ертсе пырассине пӑртак лайӑхлатрӗ. Юлашки вӑхӑтра Канашри вагонсем юсакан заводри парторганизаци (партком секретарӗ Ковалев юлташ) завод ӗҫне лайӑхлатас, поток меслечӗпе ӗҫлессине йӗркелес тӗлӗшпе хӑшпӗр ӗҫсем туса ирттерчӗ. Ҫӗмӗрлери сӗтел-пукан комбинатӗнче (партбюро секретарӗ Дмитриев юлташ) пукансем пухмалли конвейер ӗҫе кӗнӗ, халӗ сӗтел-пукан пайӗсем туса хатӗрлемелли ҫурма-автомат линийӗ тӑваҫҫӗ.

Анчах КПСС обкомӗ, хула комитечӗсем тата нумай райкомсем хӑйсен ӗҫне КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ хушнӑ пек урӑхлатса ҫӗнетеймен-ха, кулленхи пурнӑҫра тӗп ӗҫе—техникӑна тата производство технологине лайӑхлатасшӑн пыракан кӗрешӗве ертсе пырассине, юлса пыракан предприятисене малта пыраканӗсен шайне ҫитерессине манӑҫа хӑвараҫҫӗ. Ҫакӑн ҫинчен те манма юрамасть: КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ йышӑннӑ постановленире кӑларса тӑратнӑ задачӑсене пурнӑҫласси кӗске вӑхӑтлӑх кампани мар, организацилле-техникӑлла мероприятисем хатӗрлесси вӑл ӗҫ вӗҫленнине пӗлтермест, пачах урӑхла, ку вӑл парторганизацисем промышленность енӗпе тумалли ӗҫсен пуҫламӑшӗ кӑна-ха.

КПСС Канаш хула комитечӗ промышленноҫа ертсе пырассине лайӑхлатассине вӑраххӑн туса пырать, ҫакӑн пирки ӑна хулари партконференцире делегатсем тивӗҫлипе критикленӗ.

КПСС обкомӗн, Министрсен Совечӗн, республикӑри министерствӑсемпе ведомствӑсен Вырӑнти промышленность министерствин, строительство материалӗсем хатӗрлекен управленин, апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствин тата промкоопераци предприятийӗсенчи производствӑна механизацилесси, ҫав предприятисенче ҫӗнӗ техникӑна производствӑна кӗртесси ҫине уйрӑмах тимлӗн пӑхмалла, мӗншӗн тесен унта ку таранччен ӗҫе ытларах алӑ вӗҫҫӗн тӑваҫҫӗ. Халиччен пулнӑ оборудованипе туллин усӑ курас тӗсе тивӗҫлӗ мерӑсем йышӑнман-ха.

КПСС обкомӗ, хула комитечӗсем, райкомсем, ҫавӑн пекех республикӑри министерствӑсемпе ведомствӑсем малта пыракан меслетсемпе прогрессивлӑ мелсене пропагандӑлас тата вӗсене производствӑна кӗртес, рационализаципе изобретательство ӗҫне аталантарас енӗпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. 1955 ҫулта республикӑри тӑватӑ хулара рационализаторла 3 пин сӗнӳ яхӑн панӑ, вӗсенчен виҫӗ пайӗнчен пӗр пайне те ӗҫе кӗртмен.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ партипе совет органӗсене, министерствӑсен, ведомствӑсен тата предприятисен руководителӗсене кашни предприятие продукци туса кӑлармалли государство планне ҫирӗплетнӗ номенклатура тата ассортимент тӑрӑх тултармалла тума хушса хӑварчӗ. Пленум государство дисциплинине пӑсакансем ҫине либералла пӑхнине татӑклӑн пӗтерме, производствӑна ертсе пыма пултарайман работниксене ӗҫрен кӑларасси таранах мерӑсем йышӑнма хушса хӑварчӗ. Пирӗн республикӑра кашни ҫулах мӗнпур предприятисенчен тӑваттӑмӗш пайӗ плана тултараймасть. Сӑмахран, 1951 ҫулта ҫулталӑкри плана 195 предприяти, 1952 ҫулта—198, 1953 ҫулта—128, 1954 ҫулта—120, 1955 ҫулта 108 предприяти тултарман. Ҫав предприятисем пилӗк ҫул хушшинче плана палӑртнинчен 242,7 миллион тенкӗлӗх сахалтарах продукци туса кӑларнӑ, вӑл шутра 1955 ҫулта—56,7 миллион тенкӗлӗх сахалтарах продукци туса кӑларнӑ.

1955 ҫулта Шупашкарти пивопа эрех завочӗ, Энӗшпуҫӗнчи кирпӗч завочӗ, Вӑрмарти сӗтел-пукан фабрики, ҫӑс-кантӑр завочӗсем, Маслотрестпа аш-какай тресчӗн предприятийӗсем тата Строительство материалӗсем туса кӑларакан промышленность предприятийӗсем начар ӗҫленӗ.

Иртнӗ вӑхӑтри пекех «Чӑвашвӑрман» тресчӗ юлса пырать. Юлашки икӗ ҫул хушшинче вӑл плана палӑртнинчен 373 пин кубометр йывӑҫ сахалтарах хатӗрленӗ.

Ӗлӗкрех, плана сезона пынӑ рабочисемпе тата лавсемпе тултарнӑ чухне, вӑрман промышленноҫӗн работникӗсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн тӑрӑшман. Трест тата ӑна пӑхӑнса тӑракан предприятисен руководителӗсем, ҫавӑн пекех парторганизацисем те ҫав кивӗ ӗҫ меслечӗнчен хӑтӑлса ҫитмен. Вӑрман промышленноҫӗнче техникӑпа тата рабочисен яланхи кадрӗсемпе ҫителӗксӗр усӑ кураҫҫӗ, ӗҫе организацилемелли малта пыракан мелсене пурнӑҫа япӑх кӗртеҫҫӗ.

Вӑрман промышленноҫӗ юлса пынӑшӑн КПСС обкомӗ тата вӑрманпромхозсем вырнаҫнӑ районсенчи парти райкомӗсем те ответлӑ. Первомайски тата Нӑрачкав вӑрманпромхозӗсем чылайранпа юлса пыраҫҫӗ. Анчах парти райкомӗсем асӑннӑ вӑрманпромхозсен ӗҫӗпе тӗплӗн интересленмеҫҫӗ, вӗсен ӗҫне лайӑхлатма тивӗҫлӗ пулӑшу памаҫҫӗ.

1958 ҫул тӗлне республикӑри мӗнпур вӑрманпромхозсем яланхи кадрсемпе ӗҫлеме тытӑнмалла. Ҫавна пурнӑҫлас тӗлӗшпе пурӑнмалли ҫуртсем, культурӑпа йӑла учрежденийӗсем ҫителӗклӗ туса лартмалла, техникӑпа туллин усӑ курма кирлӗ майсем хатӗрлемелле.

Юлашки ҫулсенче продукци туса кӑларассине ӳстерес тата государство планӗсене тултарас енчен илсе пӑхсан, Вырӑнти промышленность министерствине Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерствине тата Чӑвашпромсовета хурлама йывӑр пек. Чӑн ӗнтӗ, 1955 ҫулта, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, продукци туса кӑларассине Чӑваш АССР Вырӑнти промышленность министерстви 132 процент, Апат-ҫимӗҫ таварӗсен промышленность министерстви—75 процент, Чӑвашпромсовет—87 процент ӳстернӗ. Ҫак ведомствӑсем 1954 тата 1955 ҫулсенчи плансене ирттерсе тултарнӑ. Анчах халӗ вӑл ҫителӗксӗр. Промышленноҫӑн асӑннӑ отраслӗсен ӗҫӗсене парти хальхи вӑхӑтра кӑларса тӑратнӑ требованисем енчен, промышленноҫӑн халӑха кирлӗ япаласем туса кӑларакан, ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсене вырӑнти таварсем ҫителӗклӗ туса кӑларнипе тивӗҫтерекен отраслӗсем умне тӑратакан требованисем енчен, илсе хак памалла.

Промышленноҫӑн ҫав кирлӗ отраслӗсем юлса пынӑшӑн Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ Полукаров юлташ чылай айӑплӑ.

Юлашки ҫулсенче чугун ҫул транспорчӗн работникӗсем хӑйсен ӗҫне пӑртак лайӑхлатрӗҫ. Вӗсен ӗҫӗ лайӑхланни чугун ҫулӑн Канаш отделенине организациленинчен те килет. Чӑваш республикинчи чугун ҫул работникӗсем грузсем пуҫтармалли пилӗк ҫуллӑх задание 113,8 процент пурнӑҫларӗҫ, вагонсем ҫине кашни талӑкра грузсем тиессине ӳстерчӗҫ. 1955 ҫулта Канаш станцийӗн коллективӗ ӗҫре ҫитӗнӳсем турӗ. Вӑл Пӗтӗм Союзри социализмла ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑна тухрӗ.

Ҫавӑнпа пӗрлех чугун ҫул работникӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Ҫанталӑк сивӗтнӗренпе вагонсем ҫине грузсем тиесси чакрӗ. Поездсене ҫӳретмелли график япӑх пурнӑҫланать. Ӗҫ дисциплинине пӑснӑ фактсем нумай.

1955 ҫулхи навигацире Атӑлпа Сӑр ҫинчи речниксем грузсем турттармалли плана тултарчӗҫ, анчах пассажирсем лартса ҫӳрес, вӗсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес ӗҫри пысӑк ҫитменлӗхсене пӗтермен-ха. Речниксем умӗнче ҫакӑн пек задача тӑрать: 1956 ҫулхи навигацие ӑнӑҫлӑ ирттерес тесе, социализмла ӑмӑртӑва анлӑн сарса, флота тата ҫыран хӗрринчи хуҫалӑха хӗллехи вӑхӑтра юсамалли графика ирттерсе пурнӑҫламалла.

Пиллӗкмӗш пилӗкҫуллӑхра Чӑваш республикин халӑх хуҫалӑхне унчченхи кирек хӑш пилӗкҫуллӑхринчен те нумайрах укҫа-тенкӗ хывнӑ. 1954 ҫулта, 1951 ҫулхипе танлаштарсан, халӑх хуҫалӑхне икӗ хут нумайрах укҫа-тенкӗ хывнӑ.

Улттӑмӗш пилӗкҫуллӑхра капитальнӑй строительство ӗҫӗсем валли укҫа-тенкӗ тата нумайрах уйӑрса параҫҫӗ. Строительствӑн пысӑк программине пурнӑҫлама пысӑк строительство трестӗсем организациленӗ. Халӗ республикӑра строительство организацийӗсем 16. Халӑх хуҫалӑхне укҫа-тенкӗ хывасси ӳсни тата строительство ӗҫӗ аталанни Коммунистсен партийӗпе Совет правительстви Чӑваш республикин экономикипе культурине малалла ӳстерессишӗн, чӑваш халӑхӗн пурнӑҫне пӗрмаях лайӑхлатса пырассишӗн тӑрӑшнине питӗ уҫҫӑн кӑтартса парать. Анчах ҫав пулӑшупа усӑ курас тӗлӗшпе КПСС обкомӗпе Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Иртнӗ пилӗкҫуллӑхӑн пӗр ҫулӗнче те капитальнӑй строительство валли уйӑрса панӑ укҫа-тенкӗпе пӗтӗмпех усӑ курман. Ҫавӑн пирки ҫӗнӗ производство ҫурчӗсене вӑхӑтра ӗҫе ямаҫҫӗ, пурӑнмалли ҫуртсем, шкулсем, медицина тата ача-пӑча учрежденийӗсем валли ҫуртсем плана палӑртнинчен сахалтарах лартаҫҫӗ.

Вунултӑ строительство организацийӗнчен 1955 ҫулхи плана пилӗк организаци ҫеҫ—«Чӑвашстрой» трест, Канашри строительствӑна монтаж кантурӗ т. ыт. те тултарнӑ.

Нумай строительство организацийӗсенче государство дисциплини питӗ япӑх, кунта ӗҫе кашни объект тӑрӑх палӑртнӑ срокра туса пырасси закон пулса тӑман. Проектсем туса хатӗрлес ӗҫре те пысӑк ҫитменлӗхсем пур. Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Архитектура управленийӗн ӗлӗкхи руководителӗсем тӗрӗс мар ҫулпа пынӑ, типовой проектсене нумай улшӑнусем кӗртнӗ. Ҫав улшӑнусем строительствӑна йывӑрлатнӑ тата унӑн хакне ӳстернӗ. Управлени типовой проектсем вырӑнне ятарласа проектсем туса хатӗрлеттерме тӑрӑшнӑ.

Строительствӑна аталантарма строительство материалӗсем, уйрӑмах кирпӗчпе чул ҫитменни хытӑ чӑрмантарать. 1955 ҫулта стена хывмалли материалсем, 1950 ҫулхипе танлаштарсан, 2,5 хут нумайрах туса кӑларнӑ пулин те, республикӑра стена хывмалли материалсем нумай ҫитмеҫҫӗ. Ҫитменнипе тата 1955 ҫулта пӗр ведомство та кирпӗч туса кӑлармалли плана тултармарӗ. Строительство материалӗсем тӑвакан промышленность управленийӗ вара (начальникӗ Репкин юлташ) 1955 ҫулта кирпӗч 1954 ҫулхинчен сахалтарах туса кӑларчӗ.

Хальхи вӑхӑтра пысӑк кирпӗч завочӗсем ҫӗнӗрен тумаллине шута илсе, Ивановӑри, Канашри тата Улатӑрти кирпӗч завочӗсене ҫӗнетсе пысӑклатса пырса тата вырӑнти промышленноҫпа промысла кооперацийӗнче кирпӗч предприятийӗсем ҫӗнӗрен лартса пырса кирпӗч туса кӑларассине татӑклӑн ӳстерес пулать. Кирпӗч туса кӑларассине ӳстерес ӗҫ ҫине строительство тресчӗсен руководителӗсемпе унти парторганизацисем государство интересӗсем хушнӑ пек пӑхмалла, вӗсен строительство материалӗсем тӑвакан промышленноҫа аталантарма пулӑшмалла. Ҫавӑн пекех строительство организацийӗсен хӑйсен тимӗрпе бетон блокӗсем, конструкцисем туса хатӗрлекен предприятисем, чул кӑларакан карьерсем организацилемелле.

Промышленноҫри, транспортри, ҫыхӑну ӗҫӗнчи тата строительствӑри пысӑк ҫитменлӗхсем ҫакна кӑтартаҫҫӗ: КПСС обкомӗпе Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ республика промышленноҫне аталантарас ыйтусене кирлӗ пек тӗплӗн, тарӑннӑн тата конкретлӑ татса паман, хӑйсен ӗҫне КПСС Центральнӑй Комитечӗн июльти Пленумӗ хушнӑ пек ҫӗнетсе лайӑхлатман, халӑх хуҫалӑхӗн ҫав отраслӗнчи работниксене техникӑлла прогресшӑн, малта пыракан технологишӗн кӗрешме, малта пыракан опыта сарма тата пурнӑҫа кӗртме ҫителӗксӗр мобилизацилеҫҫӗ. КПСС обкомӗн секретарӗ Никитин юлташ тата обкомӑн промышленноҫпа транспорт пайӗн работникӗсем промышленноҫа аталантарас ӗҫри тӗп ыйтусемпе тӗплӗн интересленмеҫҫӗ, предприятисенче партилле-политикӑлла ӗҫе лайӑхрах организацилеме ҫителӗклӗ тӑрӑшмаҫҫӗ, ҫав ӗҫре партин хула комитечӗсемпе райкомӗсене сахал пулӑшаҫҫӗ.

II. Ялхуҫалӑхне ертсе пыни

Ялхуҫалӑхӗ тӗлӗшпе Коммунистсен партийӗ пысӑк задача—пилӗкҫуллӑх хушшинче тӗштырӑ тата выльӑх-чӗрлӗх продукчӗсем туса илессине икӗ хут ӳстерес задача кӑларса тӑратрӗ. Кучухнехи техникӑпа хӗҫпӑшалланнӑ тата Совет государствинчен пысӑк пулӑшу илсе тӑракан пирӗн социализмла шултра ялхуҫалӑхӗ ҫав задачӑна пурнӑҫлама вӑй ҫитерет.

КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗсем йышӑннӑ постановленисене пурнӑҫласа пырса, Чӑваш республикинчи ялхуҫалӑх ӗҫченӗсем ялхуҫалӑх продукчӗсем туса илес тӗлӗшпе юлашки икӗ ҫул хушшинче хӑшпӗр ӳсӗмсем турӗҫ.

1955 ҫулта, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, акакан ҫӗр лаптӑкӗ 32,5 пин гектар ӳснӗ. Ку вӑл, пуринчен ытларах, ҫӗртме уйне ялхуҫалӑх культурисем акнинчен килнӗ. Иртнӗ ҫулта 30 пин гектара яхӑн кукуруза акнӑ. Чкаловски районӗнчи колхозсем республикӑра чи пысӑк тухӑҫлӑ тӗштырӑ—гектартан 13,4-шер центнер туса илнӗ, гектартан 13-шер центнер — Улатӑр районӗнчи колхозсем, гектартан 12-шер центнертан ытларах—Вӑрнар, Комсомольски, Елчӗк, Красноармейски районӗсенчи колхозсем туса илнӗ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозри Ашанин, Пушин ертсе пыракан тата ытти бригадӑсенче вӑтам шутпа гектартан 26-шар центнер тӗштырӑ, 30-шар центнер сурхи тулӑ пухса кӗртнӗ.

Анчах та 1955 ҫулта тӗштырӑ тата ытти культурӑсен тухӑҫлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе колхозсем палӑртнӑ плана республика тултараймарӗ. 1955 ҫулта республикӑри колхозсенче хуратул, вир, ҫӗрулми тата кукуруза тухӑҫлӑхӗ пӗчӗккӗ пулчӗ.

Кукурузӑна илсен, агротехникӑлла ӗҫсене лайӑх пурнӑҫланӑ ҫӗрте республикӑри хӑшпӗр колхозсемпе районсем чылай тухӑҫлӑ кукуруза туса илчӗҫ. Тӗслӗхрен, Вӑрнар районӗнчи колхозсем вӑтам шутпа кашни гектартан 150-шар центнер, Чкаловски районӗнче—120-шер центнер симӗс масса илнӗ. Вӑрнар районӗнчи Сталин ячӗпе тӑракан колхозра иртнӗ ҫул 240 гектар ҫинчен вӑтам шутпа кашни гектартан 400—450-шар центнер, уйрӑм участоксем ҫинче—800-шер центнер симӗс масса илнӗ.

Мӗншӗн-ха пирӗн тырпул тухӑҫӗ сахал пулать? Нумайӑшӗ ҫавна ҫанталӑк япӑх пулнипе сӑлтавлама пӑхаҫҫӗ. Чӑнах та, ҫанталӑк условийӗсем ялхуҫалӑхӗнче пысӑк вырӑнта тӑраҫҫӗ. Анчах та тырпул сахал пулнин тӗп сӑлтавне ҫанталӑкра шырамалла мар. Юлашки 18 ҫул хушшинче лайӑх ҫанталӑк та, япӑх ҫанталӑк та пулнӑ. Ҫапах та, 1937 ҫулта туса илнӗ тырпул тухӑҫлӑхӗнчен иртни, 1955 ҫула шутламасан, нихӑш ҫулта та пулман. 1937 ҫулта республикӑра вӑтам шутпа гектартан 13 центнер ытларах тӗштырӑ илнӗ пулсан, ун хыҫҫӑнхи ҫулсенче тӗштырӑ тухӑҫӗ гектартан 10 центнертан иртни пулман. Ҫав вӑхӑтрах республикӑра малта пыракан колхозсем ҫанталӑк ниӑх пулнӑ ҫулсенче те республикӑри вӑтам тухӑҫран 1½—2 хут пысӑкрах тухӑҫлӑ тырпул туса илеҫҫӗ. Ун пек колхозсем кашни районтах пур.

Ҫапла вара, тырпул тухӑҫӗ сахал пулни хамӑртан, ялхуҫалӑхне эпир мӗнле ертсе пынинчен килет, республикӑри партипе совет тата ялхуҫалӑх органӗсем ҫӗр ӗҫ культурине тӗпрен лайӑхлатса пыманнинчен килет. Республикӑри чылай колхозсенче ака-суха ӗҫӗнче тата тырпулсене пӑхса ӳстернӗ чухне агротехникӑна пӑсаҫҫӗ, ӗҫе вӑхӑтра тумаҫҫӗ, уя удобренисем сахал кӑлараҫҫӗ, ҫавӑн пекех тата тырпул пухса кӗртнӗ чухне пысӑк тӑкаксем тӑваҫҫӗ.

Республикӑра вӑрлӑх акса ӳстерес ӗҫ япӑхнӑ.

Сортлӑ вӑрлӑх хуҫалӑхне татӑклӑн лайӑхлатмалла, пӗтӗм ҫӗр лаптӑкӗ ҫине акма йышӑннӑ сортсем акма тытӑнмалла.

Агротехникӑлла мӗнпур ӗҫсенчен уя удобренисем кӑларас ыйтӑва малти вырӑна тӑратмалла. Уя удобренисем кӑларса ҫӗре ҫемҫетмесен, пирӗн ҫӗр ҫинче нимӗнле агротехникӑпа та вӑйлӑ тырпул туса илес ҫук. Ӑна тырпул туса курнӑ ҫынсем пурте пӗлеҫҫӗ. Ҫапла пулин те, уя тислӗк, торф тата кӗл кӑларасси юлашки ҫулсенче сахалланчӗ, тислӗкпе минераллӑ удобренисем кӑлармалли план пурнӑҫланмасӑр юлать.

Уя удобренисем кӑларас ӗҫ ҫине ҫавӑн пек пӑхнипе малашне чӑтма ҫук. Тислӗк—ҫӗре пур енчен те ҫемҫетекен удобрени. Тислӗкшӗн кӗрешессине халӗ пӗтӗм халӑх кӗрешӗвӗ туса хумалла.

Удобренисем хатӗрлес ӗҫе туса пыма колхозниксене ҫӗклентерме мӗнпур майсемпе усӑ курмалла. Республикӑра ҫуллен уя 5—6 миллион тонна таран тислӗк кӑлармалла тӑвас пулать.

Юлташсем! КПСС Центральнӑй Комитечӗн Пленумӗсем йышӑннӑ решенисенче тӗштырӑ туса илессине ӳстерес тӗлӗшпе конкретлӑ ҫул-йӗр кӑтартса панӑ. Тӗштырӑ туса илесси—ялхуҫалӑх производствин тӗп никӗсӗ. Чӑваш республикинче тӗштырӑ туса илмелли тӗп услови тырпул тухӑҫлӑхне ӳстересси пулать. 1956 ҫулта пирӗн кашни гектартан вӑтам шутпа 13 центнертан кая мар тӗштырӑ туса илмелле. Планламалли ҫӗнӗ йӗрке колхозсене вырӑнти условисенче тухӑҫлӑрах пулакан культурӑсем акса туна, тырпул ытларах туса илме май парать.

Пирӗн условире—ыраш чи чӑтӑмлӑ та тухӑҫлӑ культура. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ыраш ытларах акма тӑрӑшакан чылай колхозсем тӗрӗс тӑваҫҫӗ. Ӑна 1955 ҫулта 1954 ҫулхинчен 14 пин гектар ытларах акнӑ. Ӗҫе тӗрӗс йӗркелесен эпир кӗрхи тырӑсене ҫулленех 245 пин гектар таран акса, кашни колхозрах гектартан 15 центнертан кая мар тӗштырӑ туса илме пултаратпӑр.

Пирӗн тулӑ, хуратул, пӑрҫа тата вир тухӑҫлӑхне те ӳстермелле. Кукуруза акса тӑвасси ҫине пуринчен ытларах ҫаврӑнса пӑхмалла. 1955 ҫулти итогсене илсе, хӑшпӗр колхозсен тата ялхуҫалӑх органӗсен руководителӗсем пирӗн республикӑри условире тухӑҫлӑ кукуруза туса илме май ҫук тесе вывод тума васкаҫҫӗ. Ҫав ыйту тӗлӗшпе Ҫӗрпӳри селекци станцийӗн директорӗ Лукьяненко юлташ та пачах йӑнӑш позици ҫинче тӑрать, ҫав пысӑк малашлӑхлӑ культурӑна сӑмахпа та, ӗҫпе те пропагандӑлас вырӑнне, вӑл урӑх ҫул ҫине тӑнипе тӗлӗнтерет.

Кукуруза пирӗн патӑрта та сарӑлассине, унӑн симӗс масси те, пуҫӗ те тухӑҫлӑ пулнине малта пыракан колхозсен опычӗ пурне те ӗненмелле кӑтартса пачӗ. Ҫавӑнпа та 1956 ҫулта пирӗн кукурузӑна чылай пысӑкрах лаптӑк ҫине акмалла, выльӑхсене, чи малтанах ӗнесене ҫулса ҫитерме ӑна ҫӗртме уйне ытларах акас пулать, чӗрӗлле ҫитермесӗр юлнине вара силоса хывса хӑвармалла. Суртри пуссине акнӑ кукурузӑна пуҫӗсем сӗте ларса ӑвӑс пек хытма пуҫличченех лартмалла. Кукуруза акса туна ҫынсене халех вӗрентме тытӑнмалла, удобренисем, техника, вӑрлӑх усрамалли ҫуртсем хатӗрлемелле.

Чӑваш республикинчи колхозниксем ҫӗрулми лартса тӑвас ӗҫре пысӑк опыт пухнӑ. Ҫӗрулми лайӑх апат-ҫимӗҫ шутланать, выльӑхсене ҫитерме каять, вӑл—промышленноҫа кирлӗ чӗртавар енчен илсен те хаклӑ культура.

Халӑх хуҫалӑхӗнче техникӑлла культурӑсем те кирлӗ. Ҫавӑнпа пирӗн кантӑр, хӑмла, махорка лаптӑкӗсене те ӳстермелле.

Вӑйлӑ тырпул туса илесси ҫуракине лайӑх хатӗрленнинчен килет. Кӑҫал республикӑра вӑрлӑх енчен ӗҫсем лайӑхрах. Анчах та уйрӑм колхозсенче вӑрлӑх ҫитмест. Техникӑлла культурӑсен вӑрлӑхӗ ҫителӗксӗр. Нумай колхозсемпе уйрӑм районсенче вӑрлӑх тасатас тата кондицие ларман вӑрлӑх парса ун вырӑнне лайӑх вӑрлӑх туянас тӗлӗшпе тӑрӑшни ҫук. Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсене пирӗн хӑвӑртрах пӗтерес пулать, машинӑсемпе ӗҫхатӗрӗсене тата транспорт таврашне часрах юсаса ҫитермелле, КПСС XX-мӗш съездне ҫуракине хатӗрленсе ҫитнипе кӗтсе илмелле.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ ҫинчен. КПСС обкомӗпе Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ КПСС Центральнӑй Комитечӗн январьти Пленумӗн постановленине пурнӑҫлассине ҫителӗксӗр организациленӗ. Вӗсем колхозсенче обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ чӑтма ҫук кая юлса пынине пӗтерейменрӗҫ. Выльӑх-чӗрлӗхрен продукци илесси иртнӗ ҫулта чакрӗ, ҫавӑнпа вӑл государствӑн хатӗрлев планӗсене тултарма май памасть, ҫавӑн пекех тата колхозсемпе колхозниксен нушисене тивӗҫтерейместь.

1954 ҫулта, 1953 ҫулхипе танлаштарсан, обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх йышӗ кӑштах ӳсрӗ, анчах 1954—1955 ҫулсенче хӗлле пур выльӑх йышӗ те чылай чакрӗ. 1955 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне вара выльӑх-чӗрлӗх йышне малтанхи шута ҫитереймен. Ҫавна пула 1955 ҫулта республикӑра колхозсенче обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана пур выльӑх енӗпе те, сысна амисемсӗр пуҫне, тултарман. Вӑл ҫеҫ те мар. 1955 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗ тӗлне, 1954 ҫулхипе танлаштарсан, выльӑх-чӗрлӗх йышӗ чакрӗ.

Ама выльӑх шучӗ сахалланса пынине урӑх чӑтса тӑма ҫук. Ҫӗнӗ хуҫалӑх ҫулӗн 3 уйӑхӗнче ӗнесен шучӗ 2.877 пуҫ, сысна амисен шучӗ 9.336 пуҫ, сурӑхсен шучӗ 9.112 пуҫ чакнӑ. Ама выльӑха, уйрӑмах ӗнесен шутне сахаллатни, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫе пысӑк сиен кӳрет, ҫавӑнпа та пӗр тӑхтаса тӑмасӑр ҫак ӗҫе чарса лартмалла, плана пӑхнӑ шута ҫитерме ӗнесене сутӑн илес пирки мерӑсем йышӑнмалла.

Республикӑра колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх нумай вилсе пӗтет. Япӑх пӑхнипе пула тата ама выльӑхсене чуптарассине кирлӗ пек йӗркелеменнипе пула иртнӗ ҫулта кашни 100 ама выльӑхран пӗтӗмпе те 550-шар сысна ҫури, 76-шар пӑтек, 77-шер пӑру ҫеҫ илнӗ. Ама выльӑха хӗсӗр хӑварни колхозсене пысӑк сиен кӳрет.

Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗхрен илекен продукци ытла та пӗчӗккӗ. Пӗлтӗр вӑтам шутпа кашни сӑвакан ӗнерен пӗтӗмпе те 1.042-шер килограмм сӗт суса илнӗ (1954 ҫулта 1.040-шер килограмм пулнӑ), кашни сурӑхран вӑтам шутпа 2,3-шер килограмм ҫӑм касса илнӗ, кашни чӑхран 37-шер ҫӑмарта илнӗ. «Правда» хаҫат ӗнесенчен сӗт сахал суса илнӗшӗн пире тӗрӗс критиклерӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫ чӑтма ҫук юлса пырать. Задача ҫакӑнта пулать: обществӑлла хуҫалӑхӑн ҫак питех те кирлӗ отраслне аталантарас ӗҫри йывӑрлӑхран тухма татӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла.

Ҫак тӗллевпе мӗнпур выльӑх-чӗрлӗх тата кайӑк-кӗшӗк йышне ӳстерес тӗлӗшпе колхозсем йышӑннӑ плансене тултарма мерӑсем йышӑнмалла. Хӑшпӗр руководительсем хӑйсене юлашки вӑхӑтченех выльӑх мисе пуҫа ҫитнине кӑна шутласа пурӑннӑшӑн критикленине йӑнӑш ӑнланчӗҫ. Халӗ вара ҫак юлташсем тепӗр енне сулӑнчӗҫ: вӗсем выльӑх йышне шута илме те пӑрахрӗҫ, плана выльӑх-чӗрлӗх шучӗ енӗпе тултарасси ҫине ҫаврӑнса та пӑхмаҫҫӗ. Ҫавна пула колхозсенчи выльӑх шучӗ нумай чакрӗ. Обществӑлла выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре ҫакӑн пек туни пулмалла мар.

Колхозсенче зооветеринари ӗҫне татӑклӑнах лайӑхлатмалла. Ама выльӑха хӗсӗр хӑварассине пӗтермелле. Выльӑх-чӗрлӗх ӑратлӑхне лайӑхлатмалла. Выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне тата валовой продукци туса илессине ӳстересси—выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫри тӗп задача. Чӑваш республикин 1956 ҫулта кашни ӗнерен 1.500—1.600-шер килограмран кая мар, ҫав шутра хӗллехи вӑхӑтра 700-шер килограмран кая мар, сӗт суса илме майсем пур. Анчах та хуҫалӑх ҫулӗн 3 уйӑхӗнче республикипе кашни ӗнерен вӑтам шутпа пӗтӗмпе те 114-шар килограмм ҫеҫ сӗт суса илнӗ.

Кӑҫал ытти выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне те чылай ӳстермелле. Ҫав шутпа уйрӑмах сыснасене самӑртасси ҫине, ҫавӑн пекех мӑйракаллӑ шултра выльӑха, сурӑхсене тата кайӑк-кӗшӗке самӑртасси ҫине тимлӗн пӑхмалла, кайӑк-кӗшӗк ӗрчетессине лайӑхлатмалла.

Пирӗн кадрсемпе ӗҫлессине лайӑхлатмалла, мӗншӗн тесен ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне вӗсем татса параҫҫӗ. Пирӗн выльӑх-чӗрлӗх пӑхас тӗлӗшпе чаплӑ кадрсем пур, вӗсен ячӗсене пӗтӗм республикипех лайӑх пӗлеҫҫӗ. Юлашки вӑхӑтра малта пыракан колхозсемпе фермӑсен опытне пропагандӑлассипе тата ӗҫе кӗртсе пырасси кӑштах лайӑхланчӗ.

Икӗ ҫул каярах выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес ӗҫре 943 коммунист ӗҫленӗ пулсан, халӗ фермӑсенче 1.109 коммунист ӗҫлет. Фермӑсенче ӗҫлекенсем час-часах улшӑнса тӑрасси пӗтсе пырать. Ҫапах та чылай колхозсемпе районсенче халӗ те выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекенсем ҫине кирлӗ пек пӑхмаҫҫӗ, социализмла ӑмӑртӑва организацилессишӗн тата выльӑх пӑхакансем валли культурӑпа йӑла условийӗсене кирлӗ пек туса парассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ. Фермӑсенче ӗҫлекенсем выльӑх-чӗрлӗх тухӑҫлӑхне ӳстерессишӗн ҫине тӑрса кӗрешчӗр тесен, вӗсене пурлӑх енчен хавхалантарассине лайӑхлатмалла.

Чылай колхозсенче выльӑх-чӗрлӗх усрама лайӑх витесем ҫитмеҫҫӗ. Выльӑх-чӗрлӗх пӑхас ӗҫри вӑй нумай хумалли ӗҫсене начар механизациленӗ. Хальхи вӑхӑтра 1.520 мӑйракаллӑ шултра выльӑх фермипе сысна ферминчен 240 фермӑра кӑна шыв парса тӑрассине механизациленӗ, 760 мӑйракаллӑ шултра выльӑх ферминчен 54 фермӑра кӑна автопоилкӑсем тунӑ, 71 фермӑра механизациленӗ транспорт пур, 9 фермӑра ҫеҫ ӗнесене электричество вӑйӗпе сӑваҫҫӗ. 1956 ҫулта лайӑх витесем тӑвассине тата фермӑсене механизацилессине, уйрӑмах шыв парса тӑрас ӗҫе механизацилессине пур майсемпе те малалла сарса пымалла.

(Юлашки 3-мӗш страницӑра).

Облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ

КПСС Чăваш обкомĕн ĕçĕсем çинчен

КПСС обкомĕн секретарĕ С. М. Ислюков юлташ тунă докладран

(Юлашки. Пуçламăшĕ 2-мĕш страницăра).

Машина-трактор станцийĕсен ĕçĕсем çинчен. 1955 çулта машина-трактор станцийĕсем колхозсенчи ĕçсене 1953 çулхинчен 430 пин гектар чухлĕ ытларах турĕ. Уй-хир ĕçĕсен пахалăхĕ кăштах лайăхланчĕ. Кашни 15 лаша вăйлă трактор пуçне 1954 çулта 441 гектар чухлĕ ĕç тунă пулсан, пĕлтĕр 525 гектар чухлĕ, кашни комбайн пуçне—238 гектар чухлĕ ĕç тунă.

Партипе правительство ялхуçалăхне пысăк пулăшу пани машина-трактор станцийĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатма, тырпул тата общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе вĕсен рольне вăйлатма кирлĕ условисене пурне те туса парать. Чкаловски МТС-ĕ (директорĕ Степанов юлташ) ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Çак МТС механизаторĕсем тракторсемпе тумалли ĕçсен планне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех иртерсе тултарчĕç. МТС ĕçлекен колхозсем пысăк тухăçлă тĕштырă туса илнĕ. Кашни 15 лаша вăйлă трактор пуçне вăтамран 654 гектар чухлĕ ĕç турĕ.

Анчах республикăри нумай МТС-сем халĕ те çитменлĕхсемпе ĕçлеççĕ-ха. Тракторсем нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр тăраççĕ чылай машина-трактор станцийĕсенче пур, ялхуçалăх ĕçĕсене япăх тата вĕсене иртнерипелли срокĕсене тăсса тăваççĕ. 1955 çулта республикăра тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 96,2 процент, тырпула комбайнсемпе пуçтармалли плана 89 процент кăна тултарнă. 32 МТС-ран тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 9 МТС кăна тултарнă.

КПСС обкомĕн, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн, республикăри Ялхуçалăх министерствин, КПСС райкомĕсемпе райисполкомсен машина-трактор станцийĕсене ертсе пырассине лайăхлатмалла, вĕсен ялхуçалăх продукцийĕн туса илессине ÿстерес ĕçре рольне вăйлатмалла. Халĕхи вăхăтри тĕп задача вăл—МТС-сене çуракки иртерме лайăх хатĕрлесе çитересси, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра пысăк пахалăхпа юсасси.

Партипе правительствăн историлле решенийĕсем хыççăн республикăри чылай колхозсем организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕрекленчĕç, вĕсен укçа-тенкĕ тупăшĕ тата пайланман фончĕсем ÿсрĕç. Колхозсен укçа-тенкĕ тупăшĕ 1954 çулта, 1953 çулхипе танлаштарсан, 62,8 миллион тенкĕ чухлĕ, пайланман фондсем 28,1 миллион тенкĕ чухлĕ пысăкланнă. 1955 çулта, малтанхăха шутласа пăхнă тăрăх, колхозсен тупăшĕ татах ÿсмелле. Ĕçкунĕ тăрăх тĕштырă валеçесси икĕ хут ÿсет.

Парти обкомĕпе райкомĕсем отчетлă тапхăрта колхоз председателĕсен составне çирĕплетессине çине тимлĕ пăхрĕç. 1954 çулта ялхуçалăх специалисчĕсене тата ертсе пыракан работниксене 92 çынна колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме янă. Вăтăр пин шучĕпе кайма килĕшнисенчен колхоз председателĕсем пулса ĕçлеме 233 çынна янă. Вăтăр пин шучĕпе кайнă колхоз председателĕсенчен нумайăшĕ хăйсен колхоз производствин пултаруллă организаторĕсем пулнине кăтартса пачĕç, хăйсен ĕçре малтанхи паха результатсем турĕç.

Юлашки вăхăтра КПСС обкомĕпе Министрсен Совечĕ ялхуçалăх артелĕн Уставне пăхăнса ĕçлесси мĕнле пулса пынине тĕрĕслессине вăйсăрлатрĕç. Калас пулать, Устава пăсни халĕ те пур-ха. Хăшпĕр çĕрте хуçасăрлăх нумай, колхоз харпăрлăхне салатса пĕтереççĕ, артельсене ертсе пымалли демократилле принципсене пăхăнса пымаççĕ.

Ĕçе организацилес тата ĕçшĕн тÿлес тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пур. Нумай колхозсенче ĕçкунĕн минимумне пĕтĕм ĕçсене тума мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ кирлине шута илмесĕр тата ăна тапхăрсене пайламасăр тăваççĕ, ĕç нормисене вăхăтра пăхса тухмаççĕ.

Çакă вăл пурлăх тĕлĕшĕнчен хавхалантармалли принципа пăсасси патне илсе пырать, колхозниксен ĕçри активлăхне ÿстерме тата колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме чăрмантарать.

Ялхуçалăх продукцийĕсене хатĕрлессипе тата сутăн илессине организацилес ĕçре те çитменлĕхсем нумай.

Юлташсем! Пысăк çитменлĕхсем тата ялхуçалăхăн чылай отраслĕсен юлса пыни ялхуçалăхне обком тата республикăри Министрсен Совечĕ енчен ертсе пырасси тивĕçлĕ шайра тăмании çинчен калаççĕ.

Çакăнтан КПСС обкомĕн секретарĕсен тĕрĕс выводсем тумалла. Обкомăн ялхуçалăх пайĕ хăйĕн ĕçне вăраххăн çĕнетсе пырать. Министрсен Совечĕн председателĕ Ерлаков юлташ, чылай вăхăт хушши ĕçĕн çак участокне ертсе пынăскер, ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе çителĕклĕ таран тĕплĕн тата оперативлă ĕçлемен. Республикăри Ялхуçалăх министерствин, министрăн Мартынов юлташăн, унăн заместителĕсен Захаров, Елкин, Осанов тата Лаптенков юлташсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур, министерство уйрăмах колхозсене агрозоотехникăри енчен пулăшу парас енĕпе çителĕксĕр ертсе пырать.

Обкомпа Министрсен Совечĕ районсене вĕсен уйрăмлăхне кура ертсе пыраймарĕç, уйрăм районсем юлса пынипе, уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Шăмăршă тата Куславкка районĕсем юлса пынипе килĕшсе тăчĕç.

Юлташсем! Колхоз стройĕ социализмла ялхуçалăхне хăвăрт çĕклеме питĕ пысăк майсем туса пачĕ. Партипе правительство пире пулăшу парсах тăраççĕ. Партипе правительствăн историлле решенийĕсене пурнăçласа облаçри парторганизаци кĕçех ялхуçалăх продукцийĕн туса илессине татăклăн ÿстермелле.

III. Ĕççыннисен йăлапа культура ыйтăвĕсене тивĕçтерес енĕпе тунă ĕçсем

Совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтересси Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин кулленхи тимлĕ тăраççĕ.

Социальнăй-культурăлла ĕçсем валли Чăваш АССР-ĕн 1955 çулхи бюджетĕнчен 283,7 миллион тенкĕ расходланă.

Пурăнмалли çуртсем лартасси чылай ÿснĕ. 1954 тата 1955 çулсенче республикăра тунă пурăнмалли çуртсен лаптăкĕ 55,4 пин тăваткал метр чухлĕ пулать.

1954 çулта социальнăй страховани валли, санаторисене, кану çурчĕсене, пионер лагерĕсене кайма путевкăсем тÿлеме тухнă расходсем 1950 çулхинчен 70 процент ытларах пулнă.

Государство тата коопераци суту-илĕвĕ енĕпе халăха 1950 çулхинчен 37,3 процент ытларах тавар сутнă. 1954—55 çулсенче республикăра вакăн суту-илÿ тумалли 116 çĕнĕ предприяти тата 15 столовăй уçнă.

Анчах республикăри ĕççыннисен материальнăй пурнăçне лайăхлатма тата культурине ÿстерме мĕнпур резервсемпе усă курмаççĕ.

Пирĕн пурăнмалли çуртсем, ача-пăча тата сывлăх учрежденийĕсем çителĕксĕр. Çав вăхăтрах вĕсене тума государство паракан укçа-тенкĕн чылай пысăк пайĕ усă курмасăр юлать.

Республикăра пурăнмалли çуртсем лартмалли плана 1954 çулта 90 процент кăна тултарнă. 1955 çулта çуртсем тума 32,9 миллион тенкĕ уйăрса панă пулсан, çав шутран 28,7 миллион тенкĕ çеç усă курнă.

Шкулсем лартмалли плана 1954 çулта 57 процент, 1955 çулта 61 процент, сывлăх учрежденийĕсен çурчĕсене тумалли плана 1954 çулта 84,8 процент, 1955 çулта 94 процент тултарнă.

Халăха медицина енĕпе пулăшу парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур.

Сывлăх министерстви чылай чухне сывлăх учрежденийĕсенчи çитменлĕхсене кирлĕ пек кĕрешмест, медицина учрежденийĕсене практикăлла пулăшу сахал парать.

Ĕççыннисен сывлăхне тĕреклетме физкультурăпа спорт нумай пулăшать. Анчах пирĕн республикăра çак ĕçе начар йĕркеленĕ. Физкультурăпа спорта массăсене ытларах хутшăнтарасси тата спорт техники енĕпе результатсене лайăхлатасси кирлĕ пек пулса пымасть. Физкультура организацийĕсем тата Республикăри физкультурăпа спорт комитечĕ çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Çак ĕçе комсомолпа профсоюз организацийĕсем начар хутшăнаççĕ.

Халăха вĕрентес ĕç çине ялан тимлĕн пăхни кирлĕ. 1954—55 вĕренÿ çулĕнче çĕнĕрен 26 вăтам шкул уçнă, VIII—X-мĕш классенче вĕренекенсен йышĕ 2.991 çын ытлашшă. Иртнĕ вĕренÿ çулĕнче вăтам шкулсенче 1953 çулхинчен 2.377 çын ытла вĕренсе тухнă.

Шкул ачисем вĕренÿре лайăхрах ĕлкĕрсе пыма пулнă. Шкулсенче политехникăлла вĕренĕве йĕркелес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса иртнерĕ: алă ĕç урокĕсем иртереççĕ, чылай шкулсенче мастерскойсем тунă. Анчах халăха вĕрентес ĕçе пĕтĕмĕшпе илсен, вăл халĕ те çителĕксĕр пулса пырать. Пур ачасене те вĕрентесси çинчен калакан закон çултан-çул пурнăçланса пымасть.

Чăваш АССР Çутĕç министерстви тата министр Каховски юлташ, районсемпе хуласен çутĕç органĕсем шкулсен, ача çурчĕсемпе сачĕсен ĕçĕсене тĕплĕн пĕлсе çитме тăрăшмаççĕ, вĕсене квалификациле пулăшу сахал параççĕ.

Халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатма культура строительствин çак пысăк отраслĕне парти енчен ертсе пырассине вăйлатас пулать. Шкулсенчи парторганизацисене тĕреклетмелле. Çутĕç органĕсене тата шкулсене вĕрентÿпе воспитани ĕçне лайăхлатма пулăшас пулать.

IV. Партилле-организацилле ĕç

Парти пирĕн республика умне кăларса тăратнă пысăк та ответлă задачăсене хуçалăх пуçлăхсене парторганизацисен ертсе пырассине малалла вăйлатма тата лайăхлатма ыйтать.

КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумсен решенийĕсене пурнăçласа, парти обкомĕ хăйĕн ĕçне кăштах урăхлатса çĕнетрĕ. Ларусем иртересси тата хутсем çырасси сахалланчĕ, республикăри ертсе пыракан партипе совет работникĕсем тата КПСС обкомĕн членĕсем нумай вăхăтласа колхозсемпе районсене туха çÿрерĕç, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе конкретлă пулăшу пачĕç.

Апла пулин те организаторла тата политикăлла ĕçре уйрăмах колхозсемпе предприятисене туса пырасси обкомпа нумай райкомсен ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнман-ха. Республикăри ертсе пыракан работниксенчен нумайăшĕ районсене кайсан вăхăта ытларах район центрĕсенче иртереççĕ, рядовой çынсемпе пĕрле практикăлла ĕç тăвас вырăнне районти работниксене канашсемпе кăтартусем параççĕ кăна.

Райкомсенчи парти аппарачĕн ĕçне урăхлатса çĕнетни партин енчен ертсе пырассине ялхуçалăхĕн патне çывăхартрĕ, парторганизацисем колхозсенчи, МТС-семпе совхозсенчи ĕçсене лайăхрах пĕлекен пулчĕç. Ку тĕлĕшпе парти Вăрнарпа Çĕрпÿ райкомĕсем лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ.

Пурте пĕлеççĕ, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем иккĕмĕш çул питĕ общественнăй выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне тăтăшах ÿстерсе пыраççĕ. Кунта кашни ĕнерен 1953 çулта 700 килограмм, 1954 çулта—1.300 килограмм ытла, 1955 çулта вара 1.493 килограмм сĕт суса илнĕ. Ку вăл хăй тĕллĕн пулман. Парти райкомĕ колхозсене, фермăсенче, бригадăсенче организаторла тата политикăлла ĕçсем чылай туса иртнерĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен социализмла ăмăртăвне сарнă, выльăх-чĕрлĕх фермисенче кадрсене çирĕплетнĕ, малтан ĕçлекенсенсĕр пуçне фермăсене тата 42 коммунистла 92 комсомолеца янă.

Ялхуçалăхне парти енчен ертсе пырассине вăйлатас ĕçре КПСС райкомĕсен МТС енĕпе ĕçлекен инструкторсен ушкăнĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Инструкторсен хăшпĕр ушкăнĕсем хăйсен рольне тĕрĕс ăнланнă, вĕсем колхозсенче партилле-политикăлла ĕç хуçалăх задачисене татса парас ĕçпе пĕлсе çыхăнтарса пыраççĕ, общественнăй хуçалăха вăйлатас ĕçре парторганизацисемпе колхоз председателĕсене пулăшаççĕ. Анчах та инструкторсен ушкăнĕсенчен нумайăшĕ хăйсен вырăнне тупайман-ха, вĕсем пĕр тĕллев тытса ĕçлемеççĕ.

Пуçламăш парторганизацисем пирĕн партин никĕсĕ пулса тăраççĕ. Пултаруллă парторганизацисем пулсан, предприятисенче, колхозсенче, МТС-семпе учрежденисенче ĕçсем лайăххăн пыраççĕ. Анчах та, фактсем кăтартнă тăрăх, пирĕн пуçарусăр ĕçлекен, коллективсен тĕп задачисенчен уйрăлса кайнă, çитменлĕхсене курман пуçламăш парторганизацисемпе секретарĕсем те сахал мар-ха. Нумаях пулмасть пулса иртнĕ партин отчетлă суйлав пухăвĕсем çакна кăтартса пачĕç: хăшпĕр пысăк предприятисенче те партилле-политикăлла ĕçе юхăнтарса янă пулнă. Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче, сăмахран, партбюро секретарĕ Иванов юлташ ĕç вăхăтне комбинат дирекцийĕ иртерекен ларусемпе канашлусене ларса иртнерĕ, партилле ĕçе туса пыман. Çавна пула çак партиорганизаци секретарĕ директор «алли айне кĕрсе ÿкнĕ», массăсенчен уйрăлса кайнă. Коммунистсем Иванов юлташа партбюрон çĕнĕ составне суйламан.

Организацилле ĕçре чи кирли вăл—кадрсене суйласа илни тата решенисене пурнăçлание тĕрĕслени. Парти обкомĕ отчетлă тапхăрта кадрсемпе ĕçлессине лайăхлатрĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче Шупашкар хулинчен янă тата районти работниксенчен 64 çынна КПСС райкомĕсен секретарĕсем пулса ĕçлеме, 53 çынна райисполком председателĕсемпе вĕсен заместителĕсем пулса ĕçлеме уйăрса илнĕ, нумай работниксене колхоз председателĕсем, МТС-сенчи парторганизаци секретарĕсем пулса ĕçлеме янă. Анчах та кадрсене суйласа илес тата пысăкрах ĕçе уйăрса лартас тĕлĕшпе обкомпа парти райкомĕсен йăнăшĕсемпе çитменлĕхсем пулаççĕ, работниксен политикăлла тата ĕçри пултарулăхне пур чухне те тĕпле илмеççĕ.

Ертсе пырас ĕçе хĕрарăмсене питĕ сахал лартаççĕ.

КПСС обкомĕ халĕ те КПСС Центральнăй Комитечĕн решенийĕсене пурнăçлание тĕрĕслессине йĕркелес енĕпе начар ĕçлет. Решенисене пурнăçлание куллен тĕрĕслесе тăмани пирĕн пĕтĕм ĕçре, кадрсене воспитани парас ĕçре пăрать.

Çитменлĕхсене пĕтерес, парти, совет тата хуçалăх аппарачĕн ĕçне лайăхлатас, кадрсене воспитани парас ĕçре критикăпа самокритикăна пысăк вырăн йышăнаççĕ. Облаçри парторганизацире критикăпа самокритикăна сарас ĕç йĕркеллĕ пулса пыманнине пире КПСС Центральнăй Комитечĕпе «Правда» хаçат пĕр хутчен кăна мар кăтартса пачĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советская Чувашия» хаçат ĕçĕ çинчен» йышăннă постановлени, «Правда» хаçатра тухнă «Рангсем çинчен калакан табель» тата «Чăваш обкомĕ критикăна хăйсенсĕр пулăшать» ятлă статьясем уйрăм работниксем критика çине парти хушнă пек пăхмани çинчен калакан фактсене уçса палăртса пулăшрĕç. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн парторганизаци пулăшрĕ Министрсен Совечĕн председателĕн заместителĕ Андреев юлташ енчен критикăна хĕснĕ тĕслĕх пулнă. Çакăншăн ăна обком бюровĕ выговор панă. КПСС обкомĕн бюровĕ Сывлăх министрĕ Ефимова юлташа, Вырăнти промышленность министрне Бобров юлташа тата Етĕрне райисполкомĕн председателĕ пулнă Статуев юлташа критика çине тĕрĕс мар пăхнăшăн парти енĕпе ответ тыттарчĕ. Критикăна хĕснĕшĕн шалти ĕçсен министрне Вакарев юлташа тата Сывлăх министрĕн заместительне Сергеев юлташа ĕçрен хăтарнă тата парти енĕпе взыскани панă.

Нумаях пулмасть пулса иртнĕ отчетлă суйлав пухăвĕсем, районсемпе хуласенчи партконференцисем коммунистсен активлăхĕ ÿснине кăтартса пачĕç. Çав пухусемпе конференцисенче критикăлла асăрхаттарусем нумай пулнă тата практикăлла сĕнÿсем пулнă. Çакăн пек задача тăрать: пухусенче, пичетре критиклесе кăтартса панă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнмалла, рядовой çынсем тăвакан асăрхаттарусем çине тимлĕ пăхмалла.

Анчах та республикăри парторганизацисенче самокритикăна аялтан килекен критикăна анлăн сарма мĕн кирлине пурне те туман-ха. Çакăн пек фактсем пур: ертсе пыракан уйрăм работниксем критика çине тĕрĕс мар пăхаççĕ, сăмахра критикăна ырлаççĕ, анчах ĕçре ăна ÿтĕлемеççĕ, критикăшăн хĕсĕрлеççĕ. Чкаловски районĕнчи партконференцие делегачĕсем Владимировна Минин юлташсем райкомăн МТС енĕпе ĕçлекен секретарьне Романов юлташа критиклерĕç. Романов юлташ вара критикăна йышăнасшăн пулман, хăй тухса калаçнă чухне хăйне критиклекенсене кÿрентерĕ. КПСС Чкаловски райкомĕн бюровĕ çакăншăн Романов юлташа парти енĕпе пысăк взыскани панă тата ун çинчен парти райкомĕн пленумĕнче пăхса тухма ыйту тăратма йышăннă.

Парти обкомĕ комсомолпа профсоюз организацийĕсене ертсе пырассине лайăхлатас ĕç çине ялан тимлĕн пăхнă.

Çакăнпа пĕрлех комсомол организацийĕсене ертсе пырас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Парти райкомĕсенчен нумайăшĕ комсомол организацийĕсен кулленхи пурнăçĕпе тимлĕн интересленмеççĕ, ĕçре кирлĕ пек пулăшу памаççĕ, çамрăксене идейăлла-политикăлла воспитани парас тата комсомол организацийĕсене организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетес ыйтусем çине тимлĕн пăхмаççĕ.

1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1957 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен ВЛКСМ организацийĕсенче комсомол документчĕсене улăштараççĕ. Çак ĕç вăл комсомол организацийĕсене организаципе политика тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетме, воспитани ĕçне лайăхлатма ВЛКСМ членĕсене учета илессине тата комсомол хуçалăхне лайăх йĕркелеме пулăшать. Партин хула комитечĕсемпе райкомĕсен комсомол документчĕсене улăштарас ĕç мĕнле пынипе куллен тĕрĕслесе тăмалла.

Республикăра профсоюз членĕсем 139 пин çын ытла шутланаççĕ. Профсоюз организацийĕсем ĕççыннисене производство планĕсене срокчен тултарассишĕн кĕрешме, социализмла ăмăртăва сарма тата ĕççыннисен культурăпа пурнăç шайĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессине лайăхлатма мобилизацилес енĕпе сахал мар ĕçсем тăваççĕ. Анчах та чылай профсоюз обкомĕсем ĕç паха требованисене тивĕçтерейменс-ха.

Профсоюз организацийĕсене ертсе пырассине татăклăн лайăхлатмалла, социализмла ăмăртăва аталантарас, ĕççыннисен культурăпа пурнăç шайне пысăклатас тивĕçтерессине лайăхлатас ĕçре профорганизацисен рольне ÿстерни кирлĕ, мĕншĕн рабочисемпе служащисене профсоюз членĕсен ретне хутшăнтармалла, профсоюз членĕсен активлăхне ÿстермелле.

Отчетлă тапхăрта СССР, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен, çавăн пекех вырăнти Советсен суйлавĕсене иртнерĕ. Çак суйлавсем совет халăхĕн морально-политикăлла пĕрлĕхне кăтартса пачĕç тата коммунистсемпе партире тăмансисен блокĕ çĕнĕ çĕнтерÿ тунине вĕсенчĕç. Халĕхи вăхăтра Чăваш АССР-ĕнчи Советсене 10 пин депутат ытла шутланать. 1954 çулта ял Советсене пĕрлештерсе пысăклатрĕç. Халĕхи вăхăтра республикăра 369 ял Совечĕ шутланать, пĕрлештериччен 612 пулнă. Çак мероприяти вăл ял Советсен рольне ÿстерме, вĕсен активне пысăклатма тата ял Советсене ертсе пыракан кадрсене çирĕплетме май пачĕ. Совет органĕсен управлени аппаратне пĕчĕклетсе чакарас, çавăн пекех ытлашши хут çырассине пĕтерес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсем туса иртнерĕ. Анчах та çак ĕç çыта çителĕксĕр тесе шутлама юрамасть-ха.

КПСС обкомĕ социализмла законлăха малалла çирĕплетес енĕпе мерăсем йышăнчĕ. Социализмла законлăх вăл совет стройне тĕреклетмелли тата социализмла общество гражданĕсен законлă прависене сыхламалли питĕ кирлĕ хатĕр пулса тăрать.

V. Идеологилле ĕç

КПСС XIX-мĕш съезчĕ тата Центральнăй Комитетăн Пленумĕсем йышăннă решенисем тăрăх ĕçлесе, обком, хула комитечĕсем, райкомсем тата пуçламăш парторганизацисем коммунистсене кадрсене идейăлла-политикăлла воспитани парас ĕçе лайăхлатма мерăсем йышăнчĕç. Отчетлă тапхăрта парти вĕренĕвĕн системине çĕс кăштах лайăхлатнă. Пропагандистсен составĕ лайăхланнă.

Анчах республикăра пропаганда ĕçĕн шайĕ пирĕн малара тăракан пысăк требованисенчен, коммунистсемпе партире тăман работниксем ыйтнинчен юлса пырать-ха. Идеологилле ĕçри тĕп çитменлĕх вăл ĕç коммунизм строительствин практикинчен уйрăм пулса пыни, коммунизм строительствинчи малта пыракан, пурнăçа тĕрĕслени лайăх тĕслĕхсене пĕтĕçтерме тата хăвăрт сарма пĕлменни, пирĕн мала кайма чăрмантаракан çĕтавсене уçса палăртма тата пĕтерсе пыма пĕлменни пулать. Чылай парторганизацисем марксизм-ленинизма пропагандăлас ĕçре пирĕн вăхăтра мĕн пулса иртни — пĕрмаях ĕмĕрлĕхе юхăм историне вĕренесси енне ла туртăнаççĕ, пирĕн партин халăхри политикин ыйтăвĕсене вĕренессине юриех чарса тăраççĕ.

Пропаганда ĕçĕнче В. И. Ленинăн рабочи класпа хресченсен союзĕ çинчен калакан идейине, Коммунистсен партийĕн наци политикин никĕсĕсене, Совет Союзĕн вăй-хăвачĕн çăлкуçĕ пулса тăракан халăхсен туслăхĕн пĕлтерĕшне, социализмла лагерьти халăхсен туслăхĕ тата вĕсем пĕр-пĕрне килĕштерсе ĕçлени, ку вăл социализмла интернационализмăн чăплă палăрăвĕ пулни çинчен çителĕклĕ ăнлантарса пани çук-ха. Парти съездĕсен, конференцийĕсен тата КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕсен решенийĕсене вĕренесси çине кирлĕ пек тимлĕн пăхмаççĕ.

Республикăра конкретлă экономика ыйтăвĕсене вĕренессине япăх йĕркеленĕ. Шупашкар хулинче те çак паха ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен.

КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсенчен нумайăшĕ пропагандистсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ, вĕсене ĕçре пулăшмаççĕ. Пропагандистсен семинарĕсене час-часах япăх иртереççĕ, çавăнпа вĕсем пропагандистсене сахал пулăшаççĕ те вĕсем нумаях параймаççĕ.

Лекцилле пропагандăна пичетри пропаганда ĕçĕнче те пысăк çитменлĕхсем пур. Республикăри лекцилле пропаганда шайĕ партин лартнă требованийĕсенчен кайра тăрать.

КПСС обкомĕ тата райкомсем нумайăшĕ политикăлла тата наукăлла пĕлÿсем саракан обществăн уйрăмĕсен ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Общество уйрăмĕсем Куславкка, Ишлей, Урмар, Чурачăк, Первомайски районĕсенче уйрăмах япăх ĕçлеççĕ. Куславкка районĕнче общество членĕсем 1955 çулта колхозсене 2 лекци çеç вуланă.

Пирĕн хаçатсем вырăнти авторсен пропагандиста статьисене сайра хутра çеç пичетлеççĕ, статьясен содержанийĕ лайăх пултар тесе тивĕçлипе тăрăшмаççĕ.

Республикăри парторганизацисем 1.500 агитколлектива яхăн шутланать, вĕсенче 20 пин ытла агитатор пĕрлешсе тăрать.

Лайăх йĕркеленĕ массăлла-политикăлла ĕç, ăна предприятисен, колхозсен тата МТС-сен конкретлă задачисемпе таччăн çыхăнтарса туса пырсан, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, çĕнĕ техникăна малта пыракан опыта ĕçе кĕртме, ĕçри çитменлĕхсене пĕтерсе пыма пулăшать.

Республикăри парторганизацисем малта пыракан опытпе пропагандăлас тата сарас ĕçре малта пыракан колхозсен руководителĕсене пысăк пулăшу параççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ, КПСС обкомĕн членĕ Коротков юлташ, семинарсемпе канашлусене нумай тухса калаçса, артель хуçалăхне нумай çул хушши ертсе пырса пухнă опытна, уйрăмах пысăк тухăçлă кукуруза туса илес тĕлĕшпе пухнă опытна паллаштарчĕ. Малта пыракан опыта пропагандăлас ĕçе колхоз председателĕсем Андреев, Зайцев, Григорьев, Юхтанов, Яковлев, Васильев юлташсем, Елчĕк районĕнчи колхоз агрономĕ Васильева юлташ тата ытти юлташсем те активлă туса пыраççĕ. Анчах парторганизацисем малта пыракан колхозсен председателĕсене, лайăх ĕçлекен ферма заведующийĕсене, доярксене, сысна, кайăк-кĕшĕк, сурăх пăхакансене, вăйлă тырпул мастерĕсене, малта пыракан рабочисене, инженерсемпе техниксене массăлла-политикăлла ĕçе çителĕксĕр хутшăнтараççĕ,—шăпах ĕнтĕ малтарах асăннă çынсем, пурнăçа тата пысăк тухăçлăха ĕçлемелли майсене лайăх пĕлсе, ĕççыннисен йышлă массисене воспитани пама пултаракан пысăк вăй пулса тăраççĕ. Вăтă коммунистсене политикăлла ĕçе сахал хутшăнтараççĕ.

Республикăри тата районсенчи ертсе пыракан работниксен нумайăшĕ агитаци ĕçне сахал хутшăнаççĕ. Республикăра ответлă работниксен 122 çын КПСС обкомĕн докладчикĕсен шутĕнче тăраççĕ, анчах вĕсенчен нумайăшĕ рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче питĕ сайра хутра çеç доклад тăваççĕ, цехсенче, бригадăсенче тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче пулса ĕççыннисемпе калаçусем ирттерсе тăмаççĕ. «Советская Чувашия» хаçат редакторĕ Сысин юлташ тата «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакторĕ Якимов юлташ 1955 çулта пĕр доклад та туман. Республика прокурорĕ Сидоркин, Вырăнти промышленность министрĕ Бобров тата ытти хăшпĕр юлташсем питĕ сайра хутра çеç доклад тăваççĕ.

Пирĕн хаçатсем, журналсем тата кĕнекесем парти организацийĕсен аллинчи пысăк вăй пулса тăраççĕ. Çапах та парти обкомĕ, хула комитечĕсем тата райкомсем пичетлĕ органсене çителĕклĕ ертсе пымаççĕ. Хаçатсем пуринчен ытла руководительсене чĕнсе çыраççĕ, рабочисене колхозниксене — Коммунистсен партийĕн промышленноçа ялхуçалăхне малалла вăйлатма палăртнă программине пурнăçлакансене вара тÿрремĕн чĕнсе хавхалантармаççĕ. Вĕсем промышленноçпа ялхуçалăхĕнчи тата культура строительствинчи малта пыракан опыта сахал тата çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Нумай хаçатсем ĕççыннисен массисемпе кирлĕ пек çыхăнса тăмаççĕ, корреспондентсен активне сахал ĕçлеççĕ. Ку вăл çакăнтан та курăнать: 1955 çулта, 1954 çулхипе танлаштарсан, «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ» хаçат—3.016 çыру сахалрах илнĕ.

«Советская Чувашия» хаçатпа «Коммунизм ялавĕ» хаçат тата районсенчи хаçатсен нумайăшĕ хăйсен страницисенче критикăпа самокритикăна çителĕксĕр сараççĕ, ĕçри çитменлĕхсемпе татăклăн кĕрешмеççĕ.

Юлашки вăхăтра Чăвашсен государство издательствин ĕçĕ кăштах лайăхланчĕ. Ялхуçалăхĕнчи малта пыракан опытпе çутатса паракан кĕнекесемпе брошюрăсем ытларах кăларнă. Анчах издательство промышленноçри малта пыракансен опытне кăтартса паракан кĕнекесем кăлараймарĕ, партилле-политикăлла ĕç тата агитаципе пропаганда ĕç опычĕ çинчен калакан кĕнекесем кăларасси те çултан-çул пурнăçланмасăр юлать.

КПСС обкомĕпе Культура министерствин издательство ĕçне малалла лайăхлатмалла, пичетлесе кăларакан кĕнекесем идея тĕлĕшĕнчен çÿлĕ шайра пулччăр тесе тăрăшмалла тата кĕнекесене лайăх илемлетсе кăлармалла.

Пирĕн республикăра культурăпа çутĕç учрежденийĕсем—клубсем, вулав çурчĕсем, библиотекăсем, хĕрлĕ кĕтессем, пĕр вырăнта ĕçлекен тата куçса çÿрекен киноустановкăсем нумай. Вĕсенчен нумайăшĕ пысăк опыт пухнă, ялти чăн-чăн культура вучахĕсем пулса тăнă. Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз клубĕн çитĕнĕвĕсене 1955 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкинче кăтартнă.

Çапах та культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай-ха. Хĕлехи вăхăтра нумай вулав çурчĕсемпе клубсен ĕçĕ начарланнă. Культура министрĕ Капитонов юлташ тата парти райкомĕсем нумайăшĕ культура учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Юлашки вăхăтра чăваш литературипе искусстви çĕнĕ произведенисемпе пуянланчĕç. Чăваш писателĕсен çырнă чылай произведенисене тивĕçлипе лайăх хак панă. Композиторсем 200 произведени ытла, пĕр тытăм пĕр опера çырнă.

Анчах творчествăлла организацисен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Литературăпа искусство работникĕсем хуларă тата ялти ĕççыннисен халăхри пурнăçне кăтартса паракан произведенисене тăвас тĕлĕшпе кирлĕ пек хастарлăхпа ĕçлемеççĕ.

Художниксенчен нумайăшĕ республикăри ĕççыннисем хуçалăхла-политикăлла задачăсене пурнăçлассишĕн кĕрешнĕ çĕре хутшăнмаççĕ.

Республикăри педагогика тата ялхуçалăх институчĕсенче тата вăтам шкулсенче специалистсене вĕрентсе хатĕрлесси çултан-çул сарăлса пырать. 1955 çултанпа Шупашкарта политехника институтĕн вĕренÿ-консультаци пункчĕ ĕçлет. Çапах та кадрсем хатĕрлес ĕçре чылай пысăк çитменлĕхсем пур.

Идеологилле ĕçре çитменлĕхсемпе йăнăшсем пулни КПСС обкомĕ çак ĕçе çителĕклĕ хакламаннипе халĕ те пĕтермен килет.

КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ (заведующийĕ Абашев юлташ), шкулсенче асăл шкулсен пайĕ (заведующийĕ Шалфеева юлташ пулнă) тата КПСС обкомĕн секретарĕ Яковлев юлташ идеологилле ĕç содержанийĕ çине çителĕклĕ çавăрса пăхман, КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсене çак ĕçре çителĕклĕ пулăшман. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн культура ыйтăвĕсемпе ĕçлекен заместителĕ Андреев юлташ çителĕклĕ тăрăшни тата пуçарулла ĕçсем çук-ха.

* * *

Парти обкомĕ хăйĕн пĕтĕм ĕçĕсене КПСС Центральнăй Комитечĕн решенийĕсемпе кăтартăвĕсем тăрăх туса пычĕ. Вăл парти пурнăçĕн нормисене, коллективлă ертсе пымалли принципа тата партин шалти демократийĕн принципĕсене пурнăçласа пыма мерăсем йышăнчĕ. Обком пленумĕсене устава кăтартнă вăхăтра пухнă, пленумсенче облаçри парторганизаци пурнăçĕн чи кирлĕ ыйтăвĕсене сÿтсе явнă.

Йышăнас пулать, КПСС обком бюровĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсем пулнă. Бюро ĕçĕнче хăшпĕр ыйтусене ытласа панă тата парти пурнăçĕн принциплăх тата çине тăни пулман, облаçри парторганизацире критикăпа самокритикăна сарса пырас тĕлĕшпе уйрăм ыйтусене татса панă чухне йăнăшсем тунă, çавăншăн КПСС Чăваш обкомне партин Центральнăй органĕн — «Правда» хаçатăн страницисенче критиклерĕ.

Обком бюровĕ парти, совет, профсоюз тата хуçалăх органĕсене ертсе пыракан работниксенчен çителĕклĕ таран çирĕппĕн ыйтман.

Пирĕн пĕтĕм ĕçшĕн, парти организацийĕшĕн, ĕççыннисемшĕн партипе государство дисциплинине татăклăн çирĕплетес, облаçри пĕтĕм парторганизацире çÿлтен пуçласа аяла çитиччен—пур работниксем умне те пысăк требованисем лартса тăратмалли лару-тăру туса хуни кирлĕ.

Пирĕн умра тăракан задача çакăн пек: массăсемпе çыхăну тытассине пĕрмаях лайăхлатса, экономикăпа хуçалăх, культура строительствине малалла ертсе пырассине лайăхлатмалла. Пирĕ партин ленинла Центральнăй Комитечĕ умĕнче чыслă тăрса, КПСС Чăваш облаçри парторганизацийĕ хăйĕн ĕçне çĕнĕ çитĕнÿсемпе палăртмалла. КПСС Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе республикăри ĕççыннисене массисемпе коммунизм строительствин задачисене çĕнĕ çитĕнÿсемпе пурнăçламалла.

ИНДОНЕЗИПЕ СССР ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХ ОБЩЕСТВИ

ДЖАКАРТА, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Индонезири ун пысăк хулашенчен пĕрринче—Джокьякартăра Индонезипе СССР хушшинчи тусăх обществипе туса ячĕ. Общество председателĕ пулма Индонезири палăк обществăлла деятельне, пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членне Нурбодинингрят профессора суйланă.

КИТАЙПА ИТАЛИ ХУШШИНЧИ КАЛАÇУСЕМ

РИМ, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Лондонра Италипе Китай республики хушшинче йĕркелĕ сутă-илă сыхăнăвĕсем тăвасси çинчен Италипе Китай хушшинчи калаçусем пуçланнă.

ТИТО ПРЕЗИДЕНТ БЕЛГРАДА ПЫРСА ÇИТНЕ

БЕЛГРАД, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Эфиопипе Югослави хăйсен хыççăн паян Федеративлăй Югослави Халăх Республикин президенчĕ Иосип Броз-Тито Белграда таврăннă.

Вокзала Тито президента Моша Пьяде, Эдвард Кардель, Александр Ранковичи, Светозар Вукмановичи, Родолюб Чолаковичи тата ытти официальлăй çынсем, общественность представительĕсем кĕтсе илнĕ.

Вокзал патĕнчи площадьре митинг пуçса ячĕ. Унта Тито президент сăмах тухса калаçă.

СУРÇĔР АФРИКА ЫЙТАВНЕ МИРЛЕН ТАТСА ПАРАССИШЕН КЕРЕШЕКЕН КОМИТЕТ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

ПАРИÇ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Çурçĕр Африка ыйтавне мирлĕн татса парассишĕн кĕрешекен национальлăй комитет заявлени пичетлесе кăларнă. Заявлението çакна палăртăлă: Çурçĕр Африкăри çарпа политика тĕлĕнпĕчви лару-тăру ытларах та ытларах йывăрлăхсене пырать, Алжир халăхне хирĕçле вăрçă пĕтĕм лару-тăрăна йывăрлатать, хирĕççене сивĕчлетет. Индо-Китайри, Тунисри тата Марокăри событисен результатĕçем çинчен ака илтерсе, комитет Алжирта урăхла политика —çак çĕршывăн чăн-чăн халăх представителĕсемне калаçусем йыттăрелли политика тытса пыма кирлине кăтартса парать. Францин «çĕнĕ Наци пухăвĕне,—тенĕ заявленире,—Алжирти вăрçа чарса лартассишĕн тăвакан депутатсем пысăк ăшшăлăх. Франци халăхĕн требованийĕсене пурнăçламашкăн çак депутатсем хăйсен суйлавçисем умĕнче инкĕ обязательствăсене пурнăçласшĕнпех тăрăпма тивĕçлĕ».

Комитет çакна палăртать: Францине Алжир хушшинчи хуттăнусене Алжир халăхĕн самоопределени правине ăшшăннă тăрăх, çак икĕ çĕршыв интересĕсене хинсепленине йĕркелесе пымалла.

Комитет февралĕн 5-мĕшĕнче Монтрей хулин мэрийĕнче Алжирти вăрçа чарса лартассишĕн пыракан кĕрешӳ кунĕ иртĕрме йышăннă.

СУДАН ЮТ ÇĔРШЫВ ÇĔСЕН МИНИСТРЕ ТУХСА КАЛАНИ

КАИР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Египетри МЕН (Мидл Ист Ньюс) агентствин Хатурман пĕтĕрнĕ тăрăх, Судан ют çĕршывĕçĕсен министрĕ Мубарак Зарук çамрăк Судан государствин тулашри политики çинчен хăçатсем валли заявлени тунă, правительство «Судан интересĕсеме килĕшсе тăракан» политика тытса пыма шутланнипе палăртнă. Судан правительстви ООН Уставĕн положенийĕсене асра тытса çăлăç, хăйĕн тулашри политикинче Азине Африкăри çĕршывсен Бандунри конференцийĕнче йышăннă принципсене пурнăçдаса пырĕ, тенĕ вăл.

Ют çĕршыв çĕçен министрĕ малалла çапла калать: Судан арăп государственнисене тачă çыхăнса, килĕштерсе çăлăç, араб çĕршывĕсем хирĕç кĕрĕ, тенĕ.

ОМАН ИМАМĔН ПРЕДСТАВИТЕЛЕ ТУНА ЗАЯВЛЕНИ

КАИР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Египетри хăçатсем çапла пĕтереççĕ: Оман имамĕн Арăп çĕршывĕсен лиги çумĕнчи представителĕ Ибрагим Атфин шейх (Оман хăйне Араб çĕршывĕсен лигине индекс ыйтнă пулсан та, вăл çав лига членĕ мар-ха.—Ред.) ёнер çапла калать: Англи сарăçсем Оманра пурăнакансене хирĕç савăсах çапăçаççĕ. Ар-Рустаг хулинчи хăйăха хирĕç, тенĕ вăл, акăлчансем уйрăмах хавп вăрçă вăрçаççĕ. Оманри нефть ăмăртăмăсем вырăнсене тытса илес шутпа Англи Оманпа окчуящисемĕн. Англи сарăçсем Буреймпи оазисне тытса илнихеньĕ Атфин шейх, Оманпа окчуящисене хатĕрленсе тунă ĕç пулса тăрать. Англи Омана Саудовски Аравиран уйăрма, Оманăн нефтьлĕ районĕсене тытса илме тăрăшать. Атфин шейх çапла калать: Оман имамĕ çаплă государственнăн суверенитетне çухатмасăр, килĕштерсе ĕçлĕ, араб çĕршывĕсем хирĕç кĕрĕ, тенĕ.

ИЗРАИЛЬ САРĔСЕМ ÇЕНЕРЕН ТАПАННИ ÇИНЧЕН

Египетри хăçатсем пĕлтерни

КАИР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Египетри хăçатсем Израильпе сарăсем Египет сарăсем позицийĕсене çĕнĕрен тапăнни çинчен Египет çарăн командованийĕн представителĕ тунă заявление пичетлесе кăларăç. Заявлението çапла калăç: Израиль тытса илнĕ Эль-Ауджа районĕнче тăракан Израиль сарăсем Египет сарăсене хирĕç атака тунă. Атака тунă вăхăтра рĕсене инкоменсене тата автомата хăпăшалăна вăйăлăн персе пуçăннă. Вĕсене хирĕç ответлеве Египет сарăсем неме тăрăннă. Сапла вара пĕр-пĕрне хирĕç пĕр сехет ытла персе тăнă.



ЧЕХОСЛОВАКИ РЕСПУБЛИКИНЧЕ. Бланск хулинчи Г. Димитров ячĕпе тăракан машинăсем туса кăларакан заводра вăйлă турбинăн пысăк урапине тунă. Ана çĕнĕ гидроэлектростанцин тунă çĕрте вырнаçтараççĕ. Турбина урапи 50 тонна тăнать.

Укерчĕк çинче: Турбина урапине туртгарса наçсĕç.

Чехословакири телеграф агентстви фотоукерчĕкĕ.

(ТАСС фотохроники).

Польшăра аслă шкулсем нумайланса пыраççĕ

ВАРШАВА, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Польшăри аслă шкулсенче хĕллехи экзаменсен сессийĕ пуçланнă. Варшавăри, Лодзьри, Познańри, Вроцлаври, Гданьскри тата ытти хулăсенчи 140 пин ытла студент экзамен пама тытăннă.

Польша Халăх Республикинче аслă шкулсем шутне ӳстерес ĕç çине пысăк тимлĕ пăхаççĕ. Юлашки сулсенче унта çĕнĕ аслă шкулсем утмăла яхăн уçăлнă.

Лодзь хули аслă шкулсен пысăк центрĕ пулса тăнă. Халăхи вăхăтра унта 10 аслă шкул ĕçлет, вăрçăчченхи вăхăтра вара пĕрре те пуламан. Силезире, Люблинра, Белостокра тата ытти хулăсенче çĕнĕ аслă шкулсем уçнă.

Аслă шкулсенче пуринчен ытларах работчисемпе вăрçăчченхи вара аслă шкулсенпе вĕренекенсем хушшинче ĕçсăмписен ачисем питкĕ сахал пулнă. Халĕ студентсенчен нумайăшĕ государство стипендийĕпе илсе тăрать. Юлашки утă çул хушшинче студентсем валли 40 общежити тунă. Варшавăра, Люблинра, Олштынре тата ытти хулăсенче студентсем валли çуртсем нумай лартнă.

Китайра марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене нумай пичетлесе кăларăççĕ

ПЕКИН, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене Китайра 30 çул каялла пичетлесе кăларма тытăннă. Анчах вĕсем çĕршывăн тăрăхĕнче тухнă хыççăн тин массăллă тиражпе пичетлеме пуçланă.

«Женьминьжибао» хаçат пăхтăвĕ тăрăх, 1949 çулхи октябрь уйăхĕнчен пуçласа 1955 çула çитиччен Китайра К. Марксăн, Ф. Энгельсăн, В. И. Ленинăн тата И. В. Сталинăн 225 произведенине пичетлесе кăларнă. Вĕсен пĕтĕм тиражĕ— 23 миллион та 790 пин экземпляр.

Юлашки вăхăтра Китайра марксизм-ленинизм классикĕсен сочиненийĕсене китайла куçарас тĕлĕппе пысăк ĕç тăвасăрĕ. Китайра Коммунистсен партийĕн Центральлăй Комитечĕ сочинитсе Маркс, Энгельс, Ленин, Сталин произведенийĕсене куçарас тĕлĕппе ĕçлекен бюро 1956—1960 çулсенче тумалли ĕçсен планне паларт-ăра хунă. Çак планăн çук хушшинче К. Маркспа Ф. Энгельс сочиненийĕсен 14 томне Китай чĕлхи çине куçарассăр, В. И. Ленин сочиненийĕсен 35 томне куçарса хатĕрлеççĕ. 1956 çулта И. В. Сталин сочиненийĕсен Совет Союзăнче тухнă 13 томне пичетлесе кăларассăр. Çавăн пекех Владимир Ильич Ленинăн вĕсче биографийĕпе пичетленме тухать. И. В. Сталинăн вĕсче биографине, çавăн пекех К. Маркспа Ф. Энгельс биографийĕсене Китай чĕлхи çине куçарса пичетлесе кăларма хатĕрленеççĕ.

ИОРДАНИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ПАРИÇ, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕтерет: Иерусалимри радио пĕлтернĕ тăрăх, кинĕ Иерусалимпа Аммăнра пулса ирттĕ денонстрацисем вăхăтĕнче çарсемпе полици 11 сыннă вĕлерĕ, 38-сынна йăвăр амантăк, пĕтĕмпе 300 çын ытла çăмăл амантă.

Хальхи вăхăтра, тесе пĕлтерет агентство, Иерусалимпа Амман аэродромĕсенче мĕнпур самолетсем тăтăлнă. Иорданине Сири хушшинчи чикĕ урăх никама та каçармаççĕ.

ИОРДАНИ ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ТУНА ЗАЯВЛЕНИЙĔМ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Иорданин çĕнĕ премьер-министрĕ Ăр-Рифаи, хăй çак вырăнта ĕçлеме пуçланă май, кĕçех çыннисемпе тăвăлнă ĕçлĕ пулăшу мелĕсем çинчен калать. Вăл çапла калаçă: правительствăн мĕнле те пулин çĕнĕ союзсене кĕрес тĕллев çук. Правительство малашне те мĕнпур араб государственникĕсемпе туслă çыхăнусем тытма тăрăшнă. Палестина халăхĕнчи пекех тĕн пайту пулса тăрать. Правительство арабсен прависене хÿтĕлес задача лартать.

КАИР, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Гумхурия» хаçат корреспонденчĕ Бейрттан пĕлтернĕ тăрăх, Иорданин премьер-министрĕ Сами ар-Рифаи Англи посолĕпе Иракăн Амманри посланникне хăй патне чĕнсе илнĕ, Иорданин шалти ĕçĕсене урăх çĕршывсен хуттăмăна юрамании çинчен калаçă.

«Аль-Гумхурия» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, калаçу вăхăтĕнче «вĕсенчен премьер çĕршывăн шалти ĕçĕсене хуттăмăнсăр тăма, ăна тулăпăран ăçесс политикăна пăрахăçлама ыйтнă, çак политика çĕршывăн халăхĕн пăхăнăнусем патне илсе çитерчĕ, тенĕ».

Премьер-министр Сами ар-Рифаи тесе çыракть корреспондент, Англине Иракăн дипломатлăпа представителĕсенпе çапла калаçнă: пирĕн çĕршывра волашки вăхăтра пулса ирттĕ событисем кăтартса панă тăрăх, «Иордани халăхĕ ют çĕршывсен пакчĕсене, уйрăмах Турцине Ирак пактне (Багдадра тунă пакта) йышăнмасть».

БАГДАДРА ТУНА ПАНТĂН ЭКОНОМИКА КОМИССИЙĔН СЕССИЙĔ

ПАРИÇ, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Телеграф агентствин пĕлтернĕ тăрăх, Багдадра тунă пактăн экономика комиссийĕн сессийĕ январĕн 10-мĕшĕнче уçăлнă. Çак пактра Англи, Турци, Пакистан, Иран тата Ирак тăрăççĕ.

Экономика комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсен Иракри посолĕ ертсе пынăран виçĕ представителĕ «çынавçăсем» вырăнĕнче пулнă.

Франс Пресс агентстви, экономика комиссийĕн сессийĕ çинчен пĕлтерсе, çапла кăтартса парать: сессине хуттăмăна çынсем Багдадра тунă пактăн экономика комиссийĕн малашне пулмалли сессийĕсене Вăтам Хĕвеathтухăçĕнчи штатсен çĕршывсене те хуттăмăнтарма шутлаççĕ.

США БАГДАДРА ТУНА ПАКТ СУМНЕ ПĔРЛЕШЕС УМЕН

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк пост» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: штабсен началникĕсенĕн пĕрлештерĕмĕ ушкăнĕн председателĕ Радфорд адмирал, халăхăри Хĕвеathухăçĕнче çурçĕкепскер, Вашингтона телеграмма янă. Телеграммăра вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсене Багдадра тунă пакт сумне пĕр тăхтаса тăмасăрах официальлăй йĕркене пĕрлешме, Пакистана, Ирака тата Ирана çар тата экономика енĕпе ытларах «пулăшу парасси» çинчен усçăнах пĕлтерме сĕнет.

АМЕРИКА ХĔВЕЛАНАÇ ГЕРМАНИ ÇАРЕ ВАЛЛИ ХĔÇПАШАЛ ТАРАТАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Федеральлă Германи Республикинчи Адденауэран пĕлтернĕ тăрăх, Бонăн Пĕрлешӳллă Штатсенчен Хĕвеланăç Германи çарĕ валли хĕçпăнăн кĕрсе пынă.

Корреспондент çапла палăртать: оборона министрĕ Бланк патă приказ тăрăх репортерсемпе фотокорреспондентсене тунă хĕçпăнăн пырса çитни çинчен пĕлтерме чарнă.

ТАИЛАНДАН ХĔÇПАШАЛЛĂ ВАЙĂСЕНЕ ÜСТЕРЕÇÇĔ

БАНГКОК, январĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Таиландри хăçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Пĕрлешӳллă Штатсемпе Таиланд пĕр-пĕринпе Таиландăн çарне 80 пин çын тăран ĕçтереесси çинчен килĕшӳ тунă.

Генеральлăй штаб началникĕн заместителĕ Кунчон çапла калать: Таиланд 240 пин çыннăн тăракан çар тăвасăпăн, анчах та «пирĕн халăхи вăхăтри экономика çăвăн пек тума май пăмасть»,—тенĕ. Кунчон калать тăрăх, çитес финанс çулĕнче Таиланд США-ран çар тĕлĕпне чылай пысăкрах пулăшу илме шанса тăрать.

ЛИ СЫН МАНАН ПРОВОКАЦИЛЛЕ ЗАЯВЛЕНИЙĔ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин Сеулти корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 11-мĕшĕнче Кăтартă Корея çарĕн президенчĕсем умĕнче Ли СынМан сăмах тухса калать. Сирĕн «çĕршывра пĕрлештермешĕн çурçĕр еннелле похода» тухма хатĕр тăмалла, тенĕ вăл. Ли Сын Ман калать тăрăх, вăл «Корейăри коммунистсемне çĕнĕрен çапăçас» шухăша ниçран та пăрахман.

Республикăри хуласемпе ялсенче

☆ ☆ ☆

Парторганизаторсен семинарĕсем

КПСС Çĕрпÿ районĕ вылăх-чĕрлĕх фермисенчи работниксем хушшинче партилле-политикăлла тата культурăлла-массăллă ĕçсем туса ирттернĕ 76 парторганизатор уйăрăлă. Вĕсем хушшинче— яхăççалăх специалисчĕсем, учительсем, культурăлă çутĕç работникĕсем, коммунистсем.

КПСС райкомĕ вĕсем валли семинарсем организацилет. Нумаях пулмасть ирттернĕ семинарта парторганизаторсем çак темăсемпе докладсем илтерĕç: фермăсенчи работникисемпе калаçусем мĕнле ирттересси; кĕнекесемпе ăсатăксем вуласа парас ĕçе организацилесси; фермăра хĕрлĕ кĕтес тăвасси тата ăна йĕркелесси; фермăсенче ĕçлекенсене малта пыракан опытпа паллаштарасси, малта пыракан колхозсене экскурсемпе организацилесси; фермăсенче «боевой листоксем», «Çиçĕм» ăсатăксем каларакан çынсен каласа пайăн.

Семинарта КПСС райкомĕн МТС енĕпе ĕçлекен инструкторĕсем докладсем тăрĕç тата парторганизаторсем ăсатăксен пирвайхи ĕçĕсем çинчен каласа пачĕç. Парти райкомĕн секретарĕ Д. Кирпичев ытлăн парт. организаторсем умĕнче хальхи тапхăрта тăракан задачăсем çинчен чăрăпса тăчĕ.

Г. ФОМИН.

Рабочисем валли—çĕнĕ çуртсем

КАНАШ. (Хĕвăр иорр.). Вагонсем ĕçлекан заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем валли çуласеренех пумай хваттерлĕ çуртсем лартаççĕ. Çак кунсенче кунта темиçе хутлă икĕ çурта тума çитерчĕç. Вĕсене шăпна ăшăтаççĕ. Водопровод тăрăх кашни хваттере шыв пымалла тунă. Хваттерсенче кухньăсем, ванăйсем тата кладовойсем пур.

Çĕнĕ çуртсене пурăнма 36 семье кусрĕ. Вĕсем хушшинче—вагонсем пухакан цехри слессарь И. Григорьев, вагонсем хăтăрекен цехри газосварщик И. Чернов, тимĕрçĕ цехĕнчи молотобоец И. Блинов, кустăрма цехĕнчи инженер Н. Голиков семейисем.

Кăçал заводра ĕçлекенсем валли пумай хваттерлĕ çуртсем татах тăваттă туса пĕтерме палăртнă.

Профсоюз работникĕсем валли лекцисемпе докладсем

Суйлассем пулса ирттĕ хыççăн чылай профсоюз организацийĕсене ертсе пырас ĕçе çĕнĕ работниксем хутшăнаççĕ. Çавна пăта илсе вырăнти промышленность рабочийĕсен профсоюз обкомĕ çĕнĕ профработниксене нĕр-пĕрин опычĕпе паллаштарас тата вĕсене вĕрентесе ĕçе йĕркелерĕ. Профсоюз обкомĕ пуçлăх пулмасть. Шупашкартă фабрикăсемпе заводсен тата вырăнти комитетсен председателĕсен тăватă кунлăх семинарне ирттернĕ.

Семинарта пулнă юлташсем профсоюз организацийĕсенче организаторла, культурăлла-массăлла ĕçсене мĕнле йĕркелемелли шăпăсемпе тĕплĕн паллашрĕç, лекцисене докладсем илтерĕç.

Вырăнти промышленность рабочийĕсен профсоюз обкомĕ ситес вăхăтра фабрикăсемпе заводсен тата вырăнти комитетсен комитечĕсен председателĕсен семинарне ирттерет.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Чĕрĕк ĕмĕр—чугун çул çинче

Андрей Петрович Петров 25 çул каялла чугун çул çинче ĕçлеме тытăннă. 1943 çултанна вăл — Хусан чугун çулĕн Канашпи 5-мĕш дистанцийĕн çул-йĕр мастерĕ. Хăйне шанса панă ĕçе ялан кăтартулăпа тата тÿрĕ кăмăлпа туса пынăран ăна Совет правительстви Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденĕ, медаль, СССР Çул-йĕр министерстви — «Отличный путеец», «Ударнику Сталинского призыва» значоксем парса наградăланă.

Петров юлташ 1948 çултанпа партире тăрать. Вăл çамрăксене чугун çул транспортĕнче ĕçлеме вĕрентме, ăста специалистсем пулма пулăшать. Вăл пулăшнине Яким Павлович Николай Семенов юлташсем çул-йĕр мастерĕсем пулса ĕçлеме тытăнчĕç.

Андрей Петрович станцире пăхса тăракан линисен тăрăшне 47 километр шутлатнать. Вăл çак çула кирек мĕнле условире те хăйăх тытса тăратать. Çак кунсенче станци уçăсенче кĕрт тултăраса ларать. Машинистсемпе составительсене ĕçлеме питех те йывăр пулчĕ. Петров юлташ чугун çул çĕр тăнăкĕ ĕçлетĕр тесе тăрăмпĕ. Юр тасатакан машинăна усă курса, вăл çула поездсене вăхăтра сÿреме усса пачĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Пултарулăх спортсмена грамотăсем панă

Шупашкарти электромеханически техникумра тăвăттăмĕш курсра вĕренекен Владимир Воропаев — ДОСААФ-ăн тинĕсре сÿреме вĕрентекен клубĕн активлă членĕ. Вăл клуб ĕçне ылмăш хутшăннипе пĕрлех ытти çамрăксене те тĕрлĕ ăмăртусене хатĕрленме пулăшать.

1955 çулта Мускавра çамрăк спортсменсен ДОСААФ енĕпе мала пынăсен Пĕтĕм Союзри ăмăртăвĕ пулчĕ. Çав ăмăртура Воронаев ертсе пыракан команда флаг семафорĕпе, сăмахсем парассине е ытти сенчен йышăнаççине, вĕрен вĕçне инçете ывăтас, парус карчă шлюпкăна сÿрес енĕпе виçĕ çĕнĕ рекорд тунă. ДОСААФ Центральлăй Комитечĕ ăна виçĕ грамота панă.

Шупашкар хулинчи çамрăксем хушшинче шăпа спорчĕ енĕпе пултарулăх физкультурникĕсем хатĕрлеме пулăшнăшăн СССР-ри ДОСААФ Центральлăй Комитечĕн президиумĕ В. Воропаева татах икĕ грамота пама йышăннă.

Д. ОБЛИНОВ.

XXI-мĕш шахмат чемпионачĕ

Иртнĕ çул шахмат енĕпе республика чемпионĕн ятне илнĕ Чугунов вунпăхăм турта Таминран выляса илчĕ. Турнирта малта пыракан темĕн шахматист—Родионов Яковлевпа тĕл пулса выляпăр. Вĕсем пăрлине тĕ пĕр чухне выляса пĕтермĕç хăварна. Родионовăн пĕр пăтăнăн пешка пур. Шупашкар çыннисем Николай Петрова сĕнтĕрĕç. Гуляев—Москалевран, Сиротин—Соболевран, Романов—Игумновран выляса илчĕ. Муртазинпа Казаков партийĕнче Муртазин сĕнтĕрчĕ.

Вунă тур хыççăн республика чемпионĕ Чугунов вунă партире 8,5 очко, Никитина Родионов—тăхăрăшар партире—7,5 очко, Петров (вунă партире) 6 очко, Сиротин—5,5 очко (вăл 9 парти вылянă) выляса кĕнĕ.

РАДИОПА ПАРАКАН ПЕРЕДАЧĂСЕМ

Вырăнти вăхăтпа

Январĕн 15-мĕшĕнче

8.20—«Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия» тата «Çамрăк коммунист» хăçатсен обзорĕ.

8.55—Пĕтĕрÿсем.

17.00—«Ăслăр, кайăк çумĕ» ятлă радиоспектакль. Чăваш академи театрĕн артисчĕсем выляççĕ.

Январĕн 16-мĕшĕнче

8.20—Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем валли хатĕрленĕ передача.

8.40—Концерт. Программăра Хирĕç, Лукин, Лисков тата ытти композиторсен инструментсеемпе каламалли музыки.

8.55—Пĕтĕрÿсем.

18.30—Çĕнĕ кăмăрсем ăшăнăпа.

18.50—Пионерсемпе шкул ачисен передачи. Василий Воробьев çырнă «Пĕтĕрпе» ятлă юрра юрлама вĕрентни.

10.05—Агро-зоотехникăна вĕренекенсене пулăшма «Çамрăк вылăх-чĕрлĕхе пăхса сиктĕнтересси» ятлă лекци.

19.25—Ялхуçалăхĕнче ĕçлекенсем ыйтнăпа хатĕрленнĕ концерт.

19.45—Çĕнĕ хыпăнсем вырăсла.

Культурăлла пурнăç хроники

Ĕççымпинсен культурин ÿсеет. Элĕк районĕнчи Тени ял Советĕнчи «Дипмо» тата «Сталинград» колхозсенчи вулав çурчĕне библиотекăна 7.690 кĕнеке шутланать. Кунсăр пуçне ялсенчи 40 сыннăн хăйсен килĕсенче библиотекăсем пур.

Колхоз клубĕн снени çинче. Советски районĕнчи «Восход» колхоз клубĕне çак кунсенче республикăри кружок çÿрекен колхоз театрĕ Н. Айзманăн «Кай, кай Иванăн» ятлă пиесине выляса панă.

Медицина сестрисем. Çак кунсенче Канашри медицина училищинчи ача сачĕсенче ĕçлеме медицина сестрисем хатĕрленеç урăмра юлашки экзаменсем пулчĕç. Çулталăк хушши вĕреннĕ хыççăн 30 сын медсестра ятне илес тухтăр.

ÇАНТАЛАК

Çанталăк мĕнле пулмаллине сăнакан Шупашкарти Гидрометбюро пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 14—15-мĕшĕсенче Чăваш АССР территорийĕнче уншăнах тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулмалла. Вырăнĕ-вырăнĕнче тĕрлĕ пулмалла. Çил вăйлă мар. Сывлăпăри температура çĕрле 22—27 градус, кăнтăрла—16—21 градус снеĕ пулмалла.

Малалла-ирех çанталăк çинчен. Советски районĕнче «Восход» колхоз клубĕнче çак кунсенче республикăри кружок çÿрекен колхоз театрĕ Н. Айзманăн «Кай, кай Иванăн» ятлă пиесине выляса панă.

Медицина сестрисем. Çак кунсенче Канашри медицина училищинчи ача сачĕсенче ĕçлеме медицина сестрисем хатĕрленеç урăмра юлашки экзаменсем пулчĕç. Çулталăк хушши вĕреннĕ хыççăн 30 сын медсестра ятне илес тухтăр.

Çанталăк мĕнле пулмаллине сăнакан Шупашкарти Гидрометбюро пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 14—15-мĕшĕсенче Чăваш АССР территорийĕнче уншăнах тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулмалла. Вырăнĕ-вырăнĕнче тĕрлĕ пулмалла. Çил вăйлă мар. Сывлăпăри температура çĕрле 22—27 градус, кăнтăрла—16—21 градус снеĕ пулмалла.

Малалла-ирех çанталăк çинчен. Советски районĕнче уншăнах тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулмалла, вăхăтĕ-вăхăтĕнче юр çумалла, вырăнĕ-вырăнĕнче çăлкăн вĕтĕрмелле.

Ялăнăх, вăхăтĕ-вăхăтĕнче вăйлă çил вĕрмелле.

Сывлăпăри температура январĕн 16 — 17-мĕшĕсенче çĕрле 14—19 градус, кăнтăрла 10—15 градус, январĕн 18, 19, 20-мĕшĕсенче çĕрле 20—25 градус, кăнтăрла 14—19 градус снеĕ пулмалла.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ. Январĕн 15—16-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Люська».

Спектакльсем 18 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

Часах чăвашла çĕнĕ спектакль «Мещансем» кăтартма пуçлаççĕ.

КИНО

«РОДИНА». Январĕн 14-мĕшĕнче кăнтăрлахи тата кăçхи сеансенче çĕнĕ илемлĕ кинокомеди «Максим Перепелица» кăтартăçсĕ. Кăнтăрлахи сеансем 10, 12, 14 сехетсенче, кăçхи сеансем 16, 18.15, 20 тата 22 сехетсенче пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—5-09, оборони пайĕ—8-54, пропаганда пайĕ—5-21, халăхăлăх пайĕ—3-07, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—3-04, литературăпа искусство пайĕ—8-81, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00602 Типографи № 1 Министерства культуры Чăвашской АССР. Заказ № 16. Тираж 37.000 экз.